им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Май
29
ЭРНЕКУН
№ 103 (9012)
36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Паянхи номерте:

Тăван çĕршывра (1 стр.).
Республика уй-хирĕсенче (1 стр.).
СССР Шалти ĕçсен Министерстви пĕлтерни (2 стр.).
ПАРТИ ПУРНĂÇĔ. И. Мешков, А. Владимиров, В. Храмов.—Итоглă занятисене вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç (2 стр.).
Н. Сильвестров.—Пуçламăш парторганизаци ĕçĕ çинчен (2 стр.).
А. Воронов.—Ертсе пыракан работниксен политикăлла доклачĕсем (2 стр.).
Шкулсенчи экзаменсем (3 стр.).
Хамăр республикăра (3 стр.).
П. Анисимов.—Куллен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларар (3 стр.).
РЕДАКЦИЕ КИЛНĔ ÇЫРУСЕМ. В. Альцев — Шантарнă лекторсем килмерĕç (3 стр.).
Халăх Китайĕ Ачасене хӳтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна хатĕрленет (4 стр.).
Искусство работникĕсен туслăхĕ (4 стр.).
Пĕтĕм тĕнчери врачсен конгресĕ хупăнни (4 стр.).
Бирмăпа Китай хушшинчи суту-илӳ (4 стр.).
Корейăри ĕçсем (4 стр.).
Ф. Кузьмин.—Ыйтусемпе ответсем (4 стр.).

Çĕртме сухине вăхăтра туса хăварар

Ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан тĕп задачăна ăнăçлă татса парассишĕн кĕрешсе, пирĕн республикăри ял ĕçченĕсем тăванла Мордва тата Мари республикисенчи ял ĕçченĕсемпе социализмла ăмăртăва тухрĕç; 1953 çулта кашни гектартан вăтам шутпа 16 центнертан кая мар тĕштырă, вăл шутран 17 центнер ыраш, 16 центнер тулă туса илме, ялхуçалăхĕнчи ытти ĕçсем енĕпе те пысăк çитĕнӳсем тума пулчĕç.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пыма пирĕн пур майсем те çителĕклĕ. МТС-семпе колхозсенче ку чухнехи хăватлă техника нумайланса пырать, промышленность ялхуçалăхне минераллă удобренисем нумай парать. Государство ялхуçалăхĕ валли ăста кадрсем вĕрентсе хатĕрлет. Колхозсен уй-хирĕнче совет агробиологи науки вĕрентнине тата малта пыракансен опытне пур çĕрте те пурнăçласа пырсан, тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстерсе пыма пулать.

Республикăри чылай районсем тĕштырра, пăрça йышши культурăсене, нумай тата пĕр çул ӳсекен курăксене, тымарçимĕçсемпе силос тумалли культурăсене акса пĕтерчĕç.

Колхозсемпе МТС-сем умĕнче тăракан паянхи паллă ĕçсенчен пĕри вăл—çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешесси, çĕртме сухине вăхăтра туса хăварасси. Лайăх туса хăварнă çĕртме сухи тырпул тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Çакна малта пыракан колхозсен опычĕ те аван çирĕплетсе парать. Çĕртме сухине ир туса пĕтерни çумкурăксене, хурт-кăпшанкăсене пĕтерме, тăпрари нӳрĕлĕхе сыхласа хăварма, çапла вара, ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерме пулăшать. Çавăнпа та, çĕртме сухине партипе правительство кăтартса панă срокра туса пĕтерес тесе, хăватлă техникăпа туллин усă курмалла.

Республикăри малта пыракан колхозсемпе МТС-сем çĕртме тăвас енĕпе паха тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Вăрнар МТС-ĕнчи трактор бригадисем çĕртме сухи тумалли плана майăн 25-мĕшĕ тĕлне 60 процент ытла тултарнă. Павлунин юлташ ертсе пыракан бригада Ленин ячĕпе тăракан колхозра ирхи çĕртме тумалли задание 75 процент ытла пурнăçланă. МТС механизаторĕсем ирхи çĕртме тумалли плана июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне тултарма пулаççĕ. Шăмăршă МТС-ĕ те иртнĕ çулсенчен лайăхрах ĕçлет. Вăл çĕртме планне майăн 15-мĕшĕ тĕлне 40 процент ытла тултарчĕ. Шахуков юлташ ертсе пыракан трактор бригади задание пурнăçланă, халĕ заданирен ирттерсе ĕçлет. Ку бригадăри Николаев тракторист сменăра 7,5 гектар сухалас вырăнне 8—8,5 гектар сухалать.

Малта пыракан колхозсемпе МТС-сенче пĕр ĕçе теприн хыççăн туса пырас сиенлĕ практикăна пăрахăçа кăларнă. Унта сурприсем акса пĕтерессине хăвăртлатса пынă хушăрах, вăхăт çитнĕ май, уйрăм тракторсене ирхи çĕртме сухи тума куçарнă. Тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине лайăх йĕркеленĕ. Техникăпа пĕлсе усă курни, механизаторсем хушшинчи социализмла ăмăртура мала тухассишĕн кĕрешни ĕçре ăнăçу тума май панă.

Çĕртме сухи тумалли плана, пĕтĕмĕшпе илсен, машина-трактор станцисен тултармалла. Мĕншĕн тесен, çĕрĕç культурине ӳстерсе пырас шутпа çĕре тарăн, предплужниклă плугсемпе сухаламалла, лашасемпе çав ĕçе ăнăçлă пурнăçлама май килмест.

Çĕртме сухи тăвас ĕçре Кувакино, Элĕк, Ишлей тата ытти хăшпĕр районсем малта пыраççĕ, вĕсем плана 62 процент таран тултарнă.

Çав вăхăтрах нумай районсенче çитес çулхи пысăк тухăçлă тырпулшăн тивĕçлипе кĕрешӳ пуçарман-ха, çĕртме тăвас ĕçе кая хăварса пыраççĕ. Етĕрне районĕнче çак тарана çитсе те çĕртме тума тытăнман. Чурачăк, Капаш, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри районĕсем плана 10 процент чухлĕ те тултарайман. Юлса пыракан районсенчи МТС-сем машина-трактор паркĕпе туллин усă курмаççĕ, икĕ сменăпа ĕçлессине организацилемен, тракторсене техника тĕлĕшĕнчен пăхса тăрассине начар йĕркеленĕ, çавăнпа чылай тракторсем ĕççĕр тăраççĕ. Ĕç тухăçлăхĕ пысăк мар. Районти ялхуçалăх пайĕсемпе МТС-сем ĕç тухăçлăхне ӳстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Çĕртме сухи тумалли хăвăртлăха тĕпренех ӳстермелле. МТС директорĕсен тракторсемпе икĕ смена ĕçлессине организацилемелле, кашни тракториста сменăри нормăна тултарма тата ирттерсе тултарма условисем туса памалла.

Ĕç пахалăхне тĕрĕслесе тăрассине пĕр минутлăха та манмалла мар. Ку тĕлĕшпе МТС колхозсемпе тунă договорсенче кăтартса панă йĕркене пĕр пăркаланмасăр пурнăça кĕртсе пымалла.

Ирхи çĕртме сухине тунă чухне кăçал МТС-сен сухалакан тăпра сийне чылай пысăк лаптăксем çинче тарăнлатмалла. Ку вăл хура тăпраллă мар тăрăхра тырпул тухăçлăхне ӳстерме паха майсем туса парать. Тăпра сийне тарăнлатмалли задание агрономи науки кăтартса панă пек пурнăçлассишĕн колхозсемпе МТС-сен руководителĕсем çине тăрса тăрăшмалла. Çĕртме сухи тăвакан пусăсене тислĕк тата ытти удобренисем ытларах кăлармалла.

Кăçалтан пуçласа республикăри колхозсем кĕрхи тулă нумай акма тытăнаççĕ. Ун валли уйрăмах лайăх хатĕрленĕ çĕр кирлĕ. Районти ялхуçалăх пайĕсемпе МТС руководителĕсен тата колхоз председателĕсен кĕрхи тулă акма уйăрнă участоксене чи малтан сухаласа хăварас пулать.

Çĕртме сухи хăйĕн ӳссине пĕтĕмпех патăр тесен, ăна çу каçах тимлĕн пăхса тăни кирлĕ. Пирĕн республика условийĕсенче çĕртме пуссине çуллахи вăхăтра виçĕ хутран кая мар культиваци туса çемçетмелле.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешессине пуçарса ертсе пырасси—партипе совет органĕсен тата колхозсемпе МТС-сенчи пуçламăш парторганизацисен тивĕçĕ. Вĕсен колхозниксемпе механизаторсене хавхалантарса пымалла, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтерме пулăшмалла, малта пыракансем пек ĕçлеме вĕрентмелле, социализмла ăмăртăвăн организаторĕсем пулмалла. Партипе совет органĕсен çуракинчи мĕнпур ĕçсене хăвăртрах туса пĕтерессишĕн кĕрешнипе пĕр вăхăтрах çĕртме сухи тăвассине хăвăртлатма та кирлĕ мерăсем йышăнмалла.

Колхозсенчи çĕнĕ кадрсем

АЛМА-АТА, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Кăнтăр Казахстанра массăллăн утă çулма тытăннă. Тырпул пухса кĕртес ĕç сывхарса килет. Кăçал уй-хирсемпе çарансенчи ĕçсене пурне те тенĕ пекех механизацилесе çитернĕ. Уй-хир ĕçĕсене пиншер трактористсем, машинистсем, механиксем тата ытти специалистсем хутшăнаççĕ.

Аулсемпе ялсенче çĕнĕ йышши профессие вĕреннĕ çынсем нумай. Хальхи вăхăтра Казахстанра хресченсем çĕр пин çынна яхăн трактористсем, комбайнерсем, шоферсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем машина-трактор тата выльăх-чĕрлĕх станцийĕсен, совхозсен мастерскойĕсенчи кăткăс станоксемпе, агрегатсемпе ĕçлеççĕ.

Кăçал Казах ССР-ĕнче сурăх çăмне касас ĕçе пĕтĕмпе тенĕ пекех механизацилесе çитернĕ. Çăм касакан пунктсенче 50 пин çынна яхăн тĕрлĕ специалистсем пулса ĕçлеççĕ.

РЕСПУБЛИКА УЙ-ХИРĔСЕНЧЕ

Виçĕ республика ăмăртăвĕ

Майăн 25-мĕшĕ тĕлне çураки планне тултарнă (процентпа)

	Мордва АССР-ĕ	Мари АССР-ĕ	Чăваш АССР-ĕ
Çуртри акнă	88,6	71.6	93,5
вăл шутра:			
пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсем	93,9	78,9	98,1
çурхи тулă	111,5	103,5	107,5
йĕтĕн	—	65,4	61,0
кантăр	68,2	3,7	73,0
пахча çимĕçсем	43,7	13,1	29,4
пĕр çул ӳсекен курăксем	95,6	45,0	98,4
тымарçимĕçсем	90,3	43,8	93,2
силос культурисем	87,8	56,4	101,8
нумай çул ӳсекен курăксем	64,8	70,3	106,2
çĕрулми лартнă	58,3	48,5	80,4
ирхи çĕртме сухи тунă	20,6	17,0	23,7

Механизаторсен ӳсĕмĕсем

Комсомольски районĕнчи колхозсем çураки планне республикăра чи малтан тултарчĕç. Çуракине агротехника енчен чи лайăх срокра ирттерсе, тĕштырăсене пысăк пахалăхпа акса хăварчĕç. Паллах, çак ĕçре колхозсене МТС механизаторĕсем пысăк пулăшу пачĕç.

МТС-ри механизаторсем çуракинче тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 108,2 процент тултарчĕç. Çак çитĕнĕве трактористсем социализмла ăмăртăва анлăн сарса турĕç. Тракторсене сехет графикĕпе ĕçлеттерни пысăк ӳсĕм тума май пачĕ. Социализмла ăмăртура П. Шемякин юлташ ертсе пыракан трактор бригади малти вырăна тухрĕ. Вăл çураки планне 136,8 процент тултарчĕ. Ку бригада темиçе çул хушши ĕнтĕ «Красная звезда», Молотов ячĕпе тăракан колхозсен уй-хирĕсенче ĕçлесе, договора пур ĕçсем енĕпе те ирттерсе тултарать. Кăçалхи çуракинче те плана акас енĕпе 148 процент, сухалассипе — 101, культиваци тăвассипе 143 процент тултарчĕ. Колхоз правленийĕсем механизаторсен ĕçне яланах «лайăх» тесе йышăнаççĕ. Çак бригадăра ĕçлекен тракторист М. Родионов юлташ республикăри механизаторсем хушшинчи социализмла ăмăртăва пуçаракансенчен пĕри, хăй илнĕ социализмла обязательствăна чыслăн пурнăçласа пырать. «Красная звезда» колхоз уй-хирĕнче вăл 400 гектар тĕштырă акрĕ, 335 гектар культиваци турĕ, 81 гектар суха тунă.

Бригада МТС дирекцийĕпе парторганизацин куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне çирĕп тытса тăрать.

В. Степанов юлташ бригади çураки планне 142,9 процент тултарнă. Бригадăри трактористсем хăйсене панă заданисене пурте ирттерсе тултарнă. В. Макаровпа Л. Самарина трактористсем, ДТ-54 тракторпа Ленин ячĕпе тăракан колхозра ĕçлесе, договора ăнăçлăн пурнăçларĕç. Вĕсем бригадăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. А. Хораськин, П. Иванов, А. Наумова, В. Хораськин юлташсем те çуракинче пысăк тухăçлăх парса ĕçлерĕç. Çураки планне тултарас ĕçре М. Туркаев, С. Алексеев, Н. Кольцов юлташсен трактор бригадисем те лайăх ĕçлерĕç.

Н. КВАСОВ.
Л. ТАЛЛЕРОВ.

Агротехникăна пăсаççĕ

«Молния» колхоз—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи чи пысăк колхоз. Иртнĕ çулсенче вăл çуракинче малта пыратчĕ. Кăçалхи çуракине те 12 кунта ирттерме палăртнă. Анчах плана пăхăнса ĕçлемеççĕ, ăна пурнăçлассишĕн япăх кĕрешеççĕ. Колхоз халĕ те тырă акса пĕтермен. Çакă вăл колхоз правленийĕ колхозри вăйсене çуракине хăвăртрах ирттерме мобилизацилемен пирки пулса пырать. Колхозра ĕç дисциплини япăхнă.

МТС та колхоза начар пулăшать. Тракторист Л. Дмитриев тăрăшман пирки трактор нумай вăхăт хушши ĕçлемесĕр ларчĕ. Тепĕр тракторĕ те, юсавлă пулман пирки, ĕçлеймерĕ. Çавна пула колхоз тырă акас ĕçре питĕ кая юлчĕ. Халĕ ĕнтĕ хăшпĕр бригадăсем агротехника правилисене пăхăнмасăр ĕçлеме пуçларĕç. Тырăсене алăпа, сӳре айне акаççĕ. 2-мĕш бригадăн бригадирĕ И. Майоров колхозниксем уйра хĕрсе тырă акнă тата çĕрулми лартнă вăхăтра вырăнсăрах Сĕнтĕрвăрри хулине кайса çӳрет.

П. ГЕРАСИМОВ.

Çуртри акса пĕтернĕ

ВĂРНАР, майăн 26-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти колхозсем тĕштырăсемпе пăрça йышши культурăсем, тымарçимĕçсем, нумай çул ӳсекен курăксем акмалли государство планне майăн 25-мĕш тĕлне тултарчĕç. Тулă акмалли плана 102,3 процент, ку шутра хĕреслĕ тата ансăр ретлĕ меслетсемпе акмалли плана 110 процент, тымарçимĕçсем акмалли плана 100 процент, силос культурисем акмалли плана 100 процент, нумай çул ӳсекен курăксем акмалли плана 126 процент тултарнă.

Сталин ячĕпе тăракан колхоз çуракине уйрăмах лайăх ирттерчĕ. Кунта 250 гектар çинче тулла пĕтĕмĕшпех ансăр ретлĕ майпа акнă.

Колхозсем çĕрулми лартас, пахча çимĕç акас ĕçсене массăллăн туса пыраççĕ. МТС-ăн машина-трактор паркне ирхи çĕртме сухи тума куçарнă.

Малта пыракан бригадăра

ВĂРНАР. Уравăшри Киров ячĕпе тăракан колхозри Н. Юркин юлташ ертсе пыракан уй-хир бригади пур ĕçсемпе те малта пырать. Бригада членĕсем кăçал, трактор бригадинчи механизаторсемпе туслă ĕçлесе, кашни гектартан 20-шер центнер урпа, 18-шар центнер пăрçапа тулă, 200-шер центнер çĕрулми туса илессишĕн кĕрешеççĕ.

Çуракинче бригадăн пурĕ 126 гектар çуртри акса хăвармалла пулнă. Бригада членĕсем майăн 12-мĕшĕ тĕлне пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене акса пĕтерчĕç. 90 гектар ытла трактор сеялкисемпе акнă.

Г. ПАВЛОВ.

Ирхи çĕртме хăвăртрах туса хăварассишĕн

ÇĔРПӲ. Сталин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем çуракине пысăк пахалăхпа туса ирттерчĕç. Тĕштырăсемпе выльăх апачĕ тумалли культурăсене агротехника кăтартнă пек акрĕç. Çурхи тулла 40 гектар çине хĕреслĕ майпа акса хăварнă.

Халĕ колхоз хирĕсем симĕс тумпа тумланчĕç. Çурхи тырăсем лайăх шăтса тухрĕç.

Колхозниксем çĕртме пуссине пĕр пин тонна тислĕк кăларма тата ирхи çĕртмене хăвăртрах туса хăварма обязательство илчĕç. Тислĕк турттарма колхоз 2 автомашина тата 30 лаша уйăрнă. Майăн 23-мĕшĕ тĕлне çĕртме уйне 800 тонна ытла тислĕк кăларнă. Тислĕк кăларнă участоксем çинче чи малтан 4-мĕш бригада ирхи çĕртме сухалама тытăнчĕ.

Çак ĕçсене мĕнле туса пынине колхозра икĕ эрнере пĕрре тухса тăракан стена хаçачĕ тата кашни бригадăра тухса тăракан боевой листоксем çутатса тăраççĕ.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Кашни çемье хаçат-журнал çырăнса илтĕр

Совет çыннисем коммунизмла пичете юратаççĕ тата ăна нумай çырăнса илме тăрăшаççĕ. Пирĕн парти, вĕсен ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерес тесе, пĕрмаях хаçатсемпе журналсен идейăлла шайне хăпартма тата содержанине лайăхлатса пыма, вĕсен тиражĕсене ӳстерме тăрăшать, хаçат-журнал сарассине питĕ кирлĕ те ответлă ĕç тесе шутлать.

Хаçат-журнал сарасси — политикăлла пысăк ĕç. Пичет ĕççыннисен мĕнпур сийĕсем хушшинче мĕн чухлĕ ытларах саралать, унăн массăсене коммунизмла воспитани парас, совет çыннисен ĕçри тата политикăлла хастарлăхне çĕклес тĕлĕшри пĕлтерĕшĕ те çавăн чухлĕ çӳлерех пулать.

Парти организацийĕсен аллинче пичет пĕтĕм политикăлла, хуçалăхла тата культурăлла пурнăçа ертсе пымалли хăватлă хĕçпăшал пулса тăрать. Акă мĕншĕн ĕнтĕ хаçат-журнал сарасси парти организацийĕсен тĕп вырăнта тăракан ĕçĕсенчен пĕри шутланать.

Хаçат-журнал сарас ĕçе парторганизацисем тăтăшах ертсе пынă тата ку ĕçре çыхăну работникĕсене лайăх пулăшса тăнă çĕрте 1953 çулшăн хаçат-журнал нумай сарнă. Хаçат-журнал сарас тĕлĕшпе кăçал уйрăмах Шупашкар хулинче, Вăрнар тата Çĕмĕрле районĕсенче пысăк ĕçсем туса ирттернĕ. «Союзпичетĕн» Шупашкар хулинчи уйрăмĕ (начальникĕ Терентьева) юлташ кăçалхи тăватă уйăх хушшинчех хаçат-журнал сарса укçа-тенкĕ пухмалли çулталăкри плана 85,9 процент, «Союзпичетĕн» Вăрнар районĕнчи уйрăмĕ—84,9 процент, Çĕмĕрлери уйрăмĕ—82,6 процент тултарнă.

Анчах, пĕтĕм республикипе илсен, хаçат-журнал сармалли плана нумай енĕпе питех те çителĕксĕр пурнăçланă, пурĕ 13 пин ытла экземпляр хаçат-журнал сараймасăр хăварнă. Уйрăм районсенче, сăмахран, Чурачăк, Куславкка, Комсомольски, Шупашкар, Элĕк районĕсенче, хаçат-журнал сарас ĕçе сӳрĕккĕн туса ирттернĕ, çавăн пирки ĕççыннисен нумай сийĕсем хаçат-журнал çырăнмасăр юлнă. Çакă вăл ку районсенчи çыхăну органĕсем кирлĕ пек ĕçлеменнинчен тата парти райкомĕсем хаçат-журнал сарас ĕçе начар ертсе пынинчен килнĕ.

Чурачăк районĕнче (районти çыхăну кантурĕн начальникĕ Петров юлташ, «Союзпичетĕн» районти организаторĕ Александров юлташ) хаçат-журнал сарас ĕç хăй тĕллĕн пулса иртессе шанса пурăнаççĕ, çавăнпа та ку район республикăри хаçат-журналсене, районти хаçата, Мускавра тухса тăракан ялхуçалăх изданийĕсене илсе тăма çырăнтарас ĕçе уйăхран уйăхах тултарса пыраймасть.

Республикăри чылай районсенче, иртнĕ кĕркунне 1953 çулшăн хаçат-журнал çырăнтарас ĕçе пахалăхсăр тунă пирки, центрта тата республикăра тухса тăракан хаçатсене, районти хаçатсене илсе тăракан подписчиксен хисепĕ уйăхран уйăха чакса пычĕ. Çапла вара паянхи кун тĕлне республикăра центрти хаçат-журналсене çырăнса илесси 15.930 экземпляр, республикăри хаçат-журналсене çырăнса илесси 27.843 экземпляр чакнă.

Кăçалхи иккĕмĕш çур çулта центрти, республикăри тата районсемпе хуласенчи изданисен тиражĕсене пĕтĕмпех вырнаçтарса çитересси—çыхăну органĕсемпе парти организацийĕсен хисеплĕ тивĕçĕ пулса тăрать.

Майăн 25-мĕшĕнчен пуçласа пур çĕрте те 1953 çулхи иккĕмĕш çур çулшăн хаçат-журнал çырăнтарма пуçланă. Çыхăну органĕсен, парти организацийĕсен халĕ ĕççыннисем хушшинче совет пичечĕн пĕлтерĕшĕ çинчен анлăн ăнлантарса парас ĕçе организацилемелле, çапла вара 1953 çулхи иккĕмĕш çур çулта кашни рабочи, колхозник тата служащи çемйи хаçат-журнал çырăнса илмелле тăвас пулать.

Ку ĕçе кăтартуллă туса ирттерес шутпа, халăха хаçат-журнал çырăнтарас ĕç пуçланни çинчен анлăн пĕлтерсе тăмалла, хаçат-журнал подпискине йышăнакан пунктсене тӳременех халăх ĕçлекен вырăна куçармалла.

Хаçат-журнал сарас ĕçри тĕп принцип вăл—подпискăна уйрăм çынсенчен йышăнасси пулать. Çакăн пек тумалла: хулари тата ялти активран пĕр çын та, пĕр ĕççынни çемйи те хаçат-журналсăр ан юлтăр. Кунпа пĕрлех çакна та çирĕп асра тытмалла: культурăпа çутĕç учрежденийĕсем, библиотекăсемпе вĕренӳ заведенийĕсем те хаçат-журнал çителĕклĕ тарах илсе тăччăр.

Республикăра халĕ центрта кăларакан ялхуçалăх изданийĕсен, республикăри «Çамрăк коммунист» хаçатăн, «Ялав» журналăн тата «Тăван Атăл» альманахăн тиражĕсене вырнаçтарас ĕç юлса пырать. Апла пулин те республикăн Ялхуçалăх министерстви, ВЛКСМ обкомĕ тата Чăваш совет писателĕсен союзĕн правленийĕ ку тĕлĕшпе нимĕн те тумаççĕ.

Парти райкомĕсемпе хула комитечĕсен хаçат-журнал сарас ĕçе куллен-кун конкретлăн ертсе пырас пулать, ку ĕçре çыхăну работникĕсене ĕçлĕн пулăшса тăмалла.

Хаçат-журнал сарас ĕçре малта пыракансем подпискăна нумай сроклăха пухасси çине тимлĕн пăхаççĕ. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Сидуганов (Çĕмĕрле районĕ), Поляков (Елчĕк районĕ), Струхов (Канаш районĕ), Любимов (Улатăр районĕ) юлташсене палăртас пулать.

Парти организацийĕсен, çыхăну органĕсен хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра, йĕркеллĕ çитерме те куллен кун тăрăшмалла. Ку ĕçре, паллă ĕнтĕ, пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур. Уйрăм районсенче республикăри хаçатсене кăна мар, район хаçатне те вĕсем пичетленсе тухнă кун мар, тепĕр кунне е татах та каярах юлса валеçнине час-часах тĕл пулма пулать-ха. Чăваш АССР-ĕнчи Çыхăну управленийĕн ку ĕçре çирĕп йĕрке тумалла.

Коммунизмла пичете сарасси — пысăк та ответлă ĕç. Хаçат-журналсен тиражĕсене вырнаçтарса çитересси — мĕнпур çыхăну работникĕсен, парти организацийĕсен чыслă тивĕçĕ.

Троллейбуссем туса кăларасси ӳсет

ЭНГЕЛЬС (Саратов облаçĕ), майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Энгельс хулинчи Урицкий ячĕпе тăракан завод коллективĕ Ленинград, Фрунзе тата Владивосток хулисене троллейбуссем ярса панă. Çак кунсенче завод Куйбышев, Баку тата Алма-Ата хулисене троллейбуссем ăсатма хатĕрленет.

Урицкий ячĕпе тăракан завод туса кăларакан илемлĕ троллейбуссем пирĕн çĕршывăн нумай хулисенче çӳреççĕ. Завод коллективĕ троллейбуссем туса кăларассине тăтăшах ӳстерсе пырать. Кăçалхи пилĕк уйăхра иртнĕ çулхи пилĕк уйăхринчен 42 троллейбус ытларах туса кăларнă. Ĕç тухăçлăхĕ пĕр хут сурă ӳснĕ.

ТĂВАН ÇĔРШЫВРА

Июнь шучĕпе

УФА. Майăн 26-мĕшĕ. «Ишимбайнефть» трестне кĕрекен виççĕмĕш промысел коллективĕ нефть кăлармалли 5 уйăх планне тултарнă. Çак трестри пĕрремĕш промысел работникĕсем июнь уйăхĕнчи плана тултарас тĕлĕшпе ĕçлеме тытăннă.

ГУРЬЕВ. «Казахстаннефть» пĕрлешĕвне кĕрекен Сагиз ятлă пĕрремĕш промысел майăн 26-мĕшĕнче нефть кăлармалли 5 уйăх планне срокчен тултарнă. Нефть кăларас ĕçĕн хăйне ларакан хакне йӳнетнипе çĕршер пин тенкĕлĕх укçа перекетленĕ.

Майăн 26-мĕшĕ (ТАСС).

Пулăçсен çĕнтерĕвĕ

АСТРАХАНЬ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Облаçри пулă тытакан колхозсемпе пулă предприятисем производствăра пысăк çĕнтерӳ тунă. Пулă тытса хатĕрлемелли çулталăкри плана срокчен тултарнă. Иртнĕ çулхи çак тапхăрпа танлаштарсан, 127.100 центнер ытларах пулă тытнă.

Консерв завочĕсенче

ТИРАСПОЛЬ (Молдаван ССР-ĕ), майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Микоян ячĕпе тăракан консерв завочĕ паян çуллахи производство сезонне тытăннă. Шпинатран вуншар пин банка консерв туса кăларнă та ĕнтĕ. Çитес кунсенче Молдаври консерв завочĕсем черешньăран, симĕс пăрçаран тата çĕр çырлинчен консерв туса кăларма тытăнаççĕ.

Кăçал консерв туса кăларасси 38 миллион банка чухлĕ ӳсет.



Краснодар крайĕ. Уйри тырпула шăвармалли Кубань системи вунпĕр колхоза тата виçĕ пысăк совхозра рис плантацийĕсене шăварма шыв парса тăрать. Кубань шывĕпе 16 пин гектар çĕре шăвараççĕ.
ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: уй-хире шыв ямалли пĕрремĕш узел.
Е. ШУЛЕПОВ фотоӳкерчĕкĕ (ТАСС фотохроники).

Çĕр кăмрăкĕ кăлармалли 5 уйăх планне тултарнă

ХАБАРОВСК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Хабаровскуголь» комбинатне кĕрекен предприятисем çĕр кăмрăкĕ кăлармалли 5 уйăх планне срокчен тултарнă.

Ĕçе анлăн механизацилениипе кăçал, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, вуншар пин тонна çĕр кăмрăкĕ ытларах кăларнă.

СВЕРДЛОВСК, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Свердловскуголь» комбиначĕ çĕр кăмрăкĕ кăлармалли 5 уйăх планне тултарнă. Çĕр кăмрăкĕн хăйне ларакан хакне йӳнетнипе горняксем 4 уйăх хушшинче 800 пин тенке яхăн перекетлесе хăварнă.

«Вахрушевуголь» трест коллективĕ пысăк çитĕнӳсем тунă. Çак коллектив май уйăхĕнче 1955 çул валли палăртнă плана шайĕнчен иртнĕ.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Итоглă занятие вĕренекенсем активлăн хутшăнчĕç

ЧКАЛОВСКИ. Чкалов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи парти историне иккĕмĕш çул вĕренмелли кружокра итоглă занятисем пулса иртрĕç. Вĕренӳ çулĕнче кружокра пурĕ 28 заняти ирттернĕ, унта 18 çын вĕреннĕ.

Кружока ертсе пыракан М. Пыркин юлташ программăри юлашки темăсене вĕреннĕ вăхăтрах, малтан вĕреннĕ материалсене [illegible] йĕркеленĕ. Вăл кашни вĕренекенпе тĕрлĕ ыйтусем тăрăх уйрăммăн калаçнă, йывăртарах темăсем тăрăх консультацисем ирттернĕ.

Итоглă занятисене малтанах лайăх хатĕрлени пысăк усă пачĕ. Пропагандист лартнă ыйтусене итоглă занятисенче кашни вĕренекен лайăх ответ пачĕ.

Кружок членĕ А. Герасимова юлташ пиллĕкмĕш пилĕкçуллăх планăн пĕлтерĕшĕ çинчен ответлесе:

— Çĕнĕ пилĕкçуллăх вăл — промышленноçа, ялхуçалăхне, тавар çаврăнăшне, транспорта, сыхăну ĕçне малалла аталантармалли, халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культурăлла шайне малалла ӳстермелли аслă план пулса тăрать,—терĕ. Малалла вăл пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра Атăл çинче Шупашкар гидроэлектростанцине тума пуçăнмалли, çакă вара чăваш халăхĕшĕн калама çук пысăк савăнăç пулни, пирĕн республикăн сăн-сăпатне улăштарасси çинчен каласа пачĕ.

Вĕренекенсем пропагандист панă кашни ыйтăвах тĕплĕн сӳтсе яврĕç, хăйсем султалăк хушши вĕреннине тĕплĕн çирĕплетсе хăварчĕç. Вĕренекенсем пĕр-пĕр ыйту тăрăх каланă хыççăн тĕрĕс пĕтĕçтерӳсем тăваççĕ, вĕсене вырăнтан илнĕ тĕслĕхсемпе çирĕплетеççĕ, хальхи вăхăтри тĕнчери лару-тăрупа çыхăнтараççĕ.

55 çулхи колхозница Е. Румянцева Совет Союзĕн шалти политики çинчен акă мĕн каларĕ:

— Совет Союзĕн шалти политики—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырас политика пулса тăрать. Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене туллин тивĕçтерсе пырассишĕн тимлĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăшăн закон пулса тăрать. — Таварсен хакне йӳнетнинчен те эпир, — тет вăл,—партипе правительство пирĕн пурнăçа лайăхлатассишĕн куллен тăрăшнине курса тăратпăр.

Кружок членĕ Мулюков, Румянцева юлташăн шухăшне малалла тăсса, çапла каларĕ:

— Кăçал таварсен хакĕсене йӳнетнипе мĕн чухлĕ укçа перекетлесе хăварма пултарнине шутласа пăхнă хыççăн, эпĕ велосипед туянтăм. Партипе правительство пирĕншĕн тăрăшни çине кулленхи ĕçре лайăх ĕçленипе ответлетĕп.

Вĕренекенсем, пиллĕкмĕш пилĕкçуллăхра ялхуçалăхĕ умĕнче тăракан задачăсем çинчен каласа, хăйсен колхозĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсене палăртса хăварчĕç. Колхозăн кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 16 центнертан кая мар тĕштырă пухса кĕртмелле, кашни ĕне пуçне 1.250 килограмм сĕт, çитĕннĕ кашни сурăх пуçне 3 килограмм çăм, кашни чăхран—90 çăмарта илмелле.

Пропагандист М. Пыркин юлташ итоглă занятие лайăх ирттерчĕ. Кружокра вĕренекенсенчен уйрăмах А. Герасимова, Е. Румянцева, И. Мулюков, И. Табаков, П. Кипятков юлташсем калаçăва активлăн хутшăнчĕç.

Итоглă занятири калаçу хыççăн пропагандист вĕренекенсен отвечĕсене пĕтĕçтерчĕ, вĕсене парти вĕренĕвĕн çитес çулĕнче те кăçалхи пекех тăрăшса вĕренме сĕнчĕ.

И. МЕШКОВ.
А. ВЛАДИМИРОВ.

* * *

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Уйпуçĕнчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти учительсем парти вĕренӳ çулне ăнăçлă вĕçлерĕç. Учительсен пĕр ушкăнĕ парти историйĕн кĕске курсне, тепĕр ушкăнĕ Ленинпа Сталин произведенийĕсем тăрăх хăйсем тĕллĕн вĕренчĕç. Учительсем уйрăмах Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикăлла произведенине тăрăшса вĕренчĕç. Съезд материалĕсемпе Сталин юлташ произведенине ятарласа йĕркеленĕ кружокра вĕреннĕ. Вĕренекенсем конспектсене йĕркеллĕ çырса пычĕç, занятисенче калаçăва яланах активлă хутшăнчĕç. Парти историне тата съезд материалĕсемпе Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине уйрăмах М. А. Абрамова, Н. Г. Вастерова, Е. П. Илларионова, В. И. Тихонов учительсем тата шкул библиотекарĕ В. М. Ильина пысăк тимлĕхпе вĕренчĕç. Учительсен политикăлла пĕлĕвне ӳстерме А. М. Аргандейкин, И. В. Яковлев, В. И. Тихонов консультантсем хăйсен ĕçне лайăх туса пыни хытă пулăшрĕ. Вĕсем занятисене яланах лайăх хатĕрленсе, идейăпа политика тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттерчĕç. Учительсем хăйсен политикăлла пĕлĕвне тăтăшах ӳстерни шкулти вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма пулăшрĕ. Вĕренӳ çулĕ вĕçĕнче, пĕрремĕш чĕрĕкрипе танлаштарсан, вĕренӳре ĕлкĕрсе пырайманнисен хисепĕ чылай чакрĕ.

Учительсем хăйсем вĕреннипе пĕрлех партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикăлла произведенине халăх хушшинче ăнлантарса парас тĕлĕшпе те лайăх ĕçлеççĕ. Шкулти 12 учитель ялти лекторсен ушкăнĕнче тăрать. Лекторсен ушкăнне нумай çул хушши шкул директорĕ А. М. Аргандейкин юлташ ертсе пырать. Ăна лекципе пропаганда ĕçне лайăх туса пынăшăн Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеп грамотипе наградăланă. Лекторсем колхозниксем валли лекцисемпе докладсем тăтăшах вуласа пареççĕ, партипе правительствăн çĕнĕ постановленийĕсемпе вăхăтра паллаштараççĕ.

Учитель-лекторсем XIX-мĕш съезд материалĕсем тăрăх тата И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенийĕ çинчен кăна колхозниксем валли 27 лекци вуласа панă. Лекцисене ăнланмалла чĕлхепе, интереслă ирттереççĕ.

В. ХРАМОВ.

Ĕççыннисем валли—лекцисем

Политикăлла тата наукăлла пĕлӳсем саракан Пĕтĕм Союзри обществăн Вăрмар районĕнчи уйрăмĕ 1952 çулта 334, кăçалхи çулăн пĕрремĕш кварталĕнче 84 лекци ирттернĕ. Лекцисене общество уйрăмĕн пур членĕсем те вулаççĕ. Уйрăммăнах Антонов, Егоров, Масколенко, Савушкина, Афанасьев, Грачев юлташсем лекцилле пропаганда ĕçне активлă хутшăнаççĕ.

Пуçламăш парторганизаци ĕçĕ çинчен

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Парти райкомĕн бюровĕ «Герой» колхозри парторганизаци ĕçĕсем çинчен сӳтсе яврĕ.

Ку парторганизацире партилле-организацилле ĕçе япăх йĕркеленĕ. Массăлла-агитацилле ĕç те çителĕксĕр пулса пырать. Уйрăм коммунистсем парторганизаци панă ĕçсене кирлĕ пек туса пымаççĕ. А. Тимофеев, Т. Матвеев, А. Михайлов коммунистсем—агитаторсем, анчах вĕсем бригадăсенчи колхозниксем хушшинче нимĕн те тумаççĕ. Уйрăм коммунистсем государство умĕнчи парăмсене парса татас енĕпе ытти колхозниксене паха тĕслĕхсем кăтартмаççĕ.

Партилле-организацилле ĕçе кирлĕ пек йĕркелемен пирки ĕнтĕ коммунистсем колхоз производствине аталантарас ĕçре хăйсен пуçарулăхне палăртмаççĕ. Парторганизаци колхоз производствин тĕп ыйтăвĕсене татса пама хăюллăн тытăнмасть. Çавăнпа та тырпул тухăçĕ, выльăх-чĕрлĕх йышĕ тата унăн тупăшĕ хуллен ӳсет.

Колхозра вырăнти удобренисене хакламаççĕ, вĕсене усăсăр вырттараççĕ. 1952—1953 çулсенче минераллă удобренисемпе пачах усă курман.

Тымарçимĕçсен, силос культурисен тухăçлăхне ӳстерессишĕн те кĕрешмеççĕ. 1952 çулта çĕрулми гектартан 80 центнер, выльăх кăшманĕ 38 центнер çеç пухса илнĕ. 1951—1952 çулсенче ĕнесем тата сыснасем усрамалли плана тултарман, 1953 çулта та ĕне выльăхсем, сыснасем ĕрчетмелли плана тултарассишĕн хастарлă ĕçлени курăнмасть. Сысна усрамалли плана тултарман пулин те, сысна çурисене сутса пĕтереççĕ.

Кайăк-кĕшĕк ĕрчетес ĕç питĕ юлса пырать, çапах та инкубатортан чăх-чĕпсем илсе ӳстермеççĕ, илсен те вĕсене тĕрĕс-тĕкел пăхса усрамаççĕ.

Выльăх-чĕрлĕхрен илекен тупăш пысăк мар. Юлашки виçĕ çул хушшинче сĕт суса илмелли, çăм, çăмарта пухмалли планăн çур пайне çеç тултарса пынă.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç витесем, выльăх апачĕ çителĕксĕр пирки начар пырать. Фермăри йывăр ĕçсене механизацилес тĕлĕшпе нимĕн те туман, выльăх-чĕрлĕх апатне хатĕрлемелли машинăсем колхозра çукпа пĕрех.

Колхозра ялхуçалăх артелĕн Уставне пăсасси те пĕтмен-ха: уйрăм çынсенчен 2.855 тенкĕ укçа шыраса илмелле. Лаша хатĕрĕсене колхозниксен килĕсем тăрăх салатса панă. Çапла пулин те парторганизаци колхоз пурлăхне ӳстересси çинчен шухăшламасть, ĕçри çитменлĕхсемпе килĕшсе пурăнать.

Парторганизаци хăйĕн пухăвĕсене сайра хутра çеç ирттерет. 1953 çула кĕнĕренпе 2 пуху кăна ирттернĕ. Парти пухăвĕсенче колхоз производствине аталантарас ыйтусене сӳтсе явмаççĕ. Коммунистсем колхоз производствинче мĕнле ĕçлесе пынине парторганизаци тĕрĕслесе пымасть. Колхозра комсомол организацийĕ те япăх ĕçлет, анчах та парторганизаци ăна пулăшмасть.

Парторганизацин кĕрешӳри пултарулăхне ӳстерес тесен, ăна çирĕплетмелле. Парторганизацире 5 коммунист çеç-ха. КПСС райкомĕн бюровĕ парторганизаци ĕçне лайăхлатма тивĕçлĕ решени йышăнчĕ.

Н. СИЛЬВЕСТРОВ.

СССР Шалти ĕçсен министерстви ПĔЛТЕРНИ

Кăçалхи апрелĕн 26-мĕшĕ умĕн çĕрле СССР Шалти ĕçсен министерстви тахăш ют çĕршывăн самолечĕ Совет Союзĕн чикки урлă вĕçсе кĕни, унтан вăл Украина ССР-ĕн территорийĕ çине вĕçсе пыни çинчен пĕлтернине илнĕ. Çав самолет çинчен ют çĕршыв разведкин агенчĕсене-парашютисчĕсене антарса хăварнине палăртнă.

СССР Шалти ĕçсен министерстви тивĕçлĕ мерăсем йышăннă хыççăн апрелĕн 27-мĕшĕнче икĕ парашютиста шыраса тупса арестленĕ. Вĕсем хăйсен ячĕсем: Василий Васильевич **Васильченко** тата Леонид Николаевич **Матковский**, тесе пĕлтернĕ.

Тытнă парашютистсем хăйсем диверсантсем пулнине, вĕсене Америка разведки, диверсилле, террорла тата шпионла заданисем парса, ют çĕршывран ССР Союзне антарса хăварнине йышăннă. Диверсантсем çапла каланă: кăçалхи апрелĕн 26-мĕшĕ умĕн çĕрле вĕсене Украина ССР-ĕн территорийĕ çине Америкăн тăватă моторлă самолечĕ çинчен парашютсемпе сиктерсе хăварнă, самолет çинче вăл камăннине пĕлмелли паллăсем пулман.

Ыйтса тĕпченĕ чухне **Васильченкăпа Матковский** диверсантсем çакна йышăннă: вĕсем хăйсене Америка разведки панă, юри шухăшласа кăларнă суя ятсемпе çӳренĕ, чăннипе илсен: «Васильченко» — Александр Васильевич **Лахно** ятлă, шпионла хушамачĕ «Алек», «Матковский» — Александр Николаевич **Маков** ятлă, шпионла хушамачĕ «Пит».

Лахнопа Маков çапла кăтартса панă: вĕсемпе пĕрле Америкăн çав самолечĕ çинченех тепĕр икĕ диверсант—Америка разведкин «Джон» тата «Дик» хушаматлă агенчĕсем сиксе юлнă.

СССР Шалти ĕçсен министерстви тивĕçлĕ мерăсем йышăннипе «Джонпа» «Дик» диверсантсене те çав кунах шыраса тупса тытнă. «Джон», чăннипе илсен, Сергей Изосимович **Горбунов**, «Дик» вара — Дмитрий Николаевич **Ремига** пулнă.

Тытнă парашютистсем çумĕнче: пăшалсем, ядсем (цианистăй кали), Америкăра туса хатĕрленĕ, кĕске хумпа ĕçлекен 4 радиостанци, самолетсене тĕллев патне çул кăтартакан радиомаяксем, вăрттăн çырмалли хатĕрсем, совет документсем евĕрлĕ суя документсем тумалли хатĕрсем, нумай совет укçи, ют çĕршывсен ылтăн укçисем, совета хирĕçле листовкăсен текстне ӳкерсе хунă клишесем пулнă.

Диверсантсем анса ларнă вырăнсенче усăлса кайнă парашютсем тупнă.

Арестленĕ диверсантсен ĕçне тĕпчесе пĕлсе, çакна палăртнă: Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнчех **Лахно, Маков** тата **Горбунов** нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене активлă пулăшнă çынсем пулнă, фашистла захватчиксене хирĕç патриотла ĕç туса пынă совет çыннисене тăшман аллине тытса панă, нимĕçсен карательнăй отрячĕсем партизансене хирĕç тунă операцисене хутшăннă. Çапла, сăмахран, арестленĕ **Лахно** совет патриочĕсене пилĕк çынна тытса панă, вара вĕсене гестаповецсем персе вĕлернĕ; **Маков** диверсант, «Хура тинĕс» ятлă карательнăй батальон составĕнче пулса, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем совет патриочĕсене хирĕç тискер ĕçсем тунă çĕре темиçе хутчен те хутшăннă.

Гитлерла Германи поражени тӳснĕ хыççăн **Лахно, Маков, Горбунов** тата **Ремига** Хĕвеланăç Германие тухса тарнă, унта вĕсем хăйсен çĕнĕ хуçисемпе хӳтĕлекенĕсене — Америка разведкин органĕсене çăмăллăнах тупнă.

Тăван çĕршыва сутнă, сутăнчăкла ирсĕр ĕçсем туса опыт пухнă **Лахнона, Макова, Горбунова** тата **Ремигăна** Америка разведкин службине илнĕ те Америка разведкин ятарласа усрнă шпионла-диверсилле ĕçсем тума вĕрентекен шкулне янă. Çав шкул Баварири, Мюнхен çывăхĕнчи, Бад Висзее ятлă местечкăра вырнаçнă.

Америка разведкин офицерĕсем, шкулта «Билл», «Боб», «Капитан» тата «Владимир» тесе чĕнекен çынсем ертсе пынипе, сутăнчăк **Лахно, Маков, Горбунов** тата **Ремига** Совет Союзĕн территорийĕнче террорла, диверсилле тата шпионла ĕçсем организацилемелли меслетсене, пăшал пеме тата сăтăрла ĕç тума тĕплĕн вĕреннĕ. Вĕсене çавăн пекех Америкăн ятарласах шпионла ĕçсем валли тунă радиостанцийĕсемпе ĕçлеме те вĕрентнĕ.

Тĕпчесе пĕлнĕ чухне тата çакă палăрнă: Америкăн Бад Висзейăри диверсилле террорла ĕçсем тума вĕрентекен шкулĕнчи «преподавательсенчен» пĕри, арестленĕ парашютистсене диверсипе террор меслечĕсене вĕрентнĕскер, Америка разведкин капитанĕ **Голледей** пулнă.

Лахно, Маков, Горбунов тата **Ремига** диверсантсем кăтартса панă тăрăх, Америкăн Бад Висзейăри шпионла-диверсилле шкулĕ Хĕвеланăç Германири çавнашкал пĕртен-пĕр «шкул» мар. Çавнашкал «шкулсем» Мюнхенра, Майн çинчи Франкфуртра, Кауфбейренре тата Бад Верисгофенра та пур. Çав «шкулсенче» пуринче те Америка разведки Совет Союзĕпе халăх демократи çĕршывĕсене яма вăрттăн майпа диверсантсем тата çынвĕлеренсем вĕрентсе хатĕрлет.

Çав «шкулсенчен» пĕрин, Кауфбейренри (Бавари) «шкулĕн» руководителĕ пулса Америка разведкин майорĕ **Болленбах Рональд Отто** ĕçлет, ăна «Пеппер Джим» тесе чĕнеççĕ; вăл 1946—1947 çулсенче США-н Мускаври сывлăш-çарпа тинĕс-çар атташин помощникĕ пулнă.

Лахно, Маков, Горбунов тата **Ремига** диверсантсем çапла кăтартса панă: Бад Висзейăри «шкултан» вĕренсе тухнă хыççăн вĕсене Америка разведчикĕсем совет паспорчĕсем евĕрлĕ суя паспортсем, суя çар билечĕсем, хĕçпăшал, ядсем, радиостанцисем, шифрсем, кодсем тата ытти снаряжени панă та кăçалхи апрелĕн 23-мĕшĕнче пурне те, Америка разведкин маларах асăннă сотрудникĕпе Голледей капитанпа пĕрле, Америкăн çар самолечĕ çине ларса, Мюнхенран Греци—Афины аэродромне илсе çитерне.

Афины аэродромĕнче диверсантсене Америкăн разведка службин майорĕ Гарольд Ирвинг **Фидлер** кĕтсе илнĕ; вăл 1951 çулта США Госдепартаменчĕн дипломатилле курьерĕ пек пулса Совет Союзне виçĕ хут килсе кайнă çын.

Апрелĕн 25-мĕшĕнче каçхине диверсантсене парашютсем панă. Вĕсене **Фидлер** Америкăн маларах асăннă тăватă моторлă самолечĕ çине лартнă. Самолетăн вăл камăн пулнине пĕлмелли паллăсем пулман. Самолет диверсантсене Совет Союзĕн территорийĕ çине сиксе юлмалли вырăна илсе çитернĕ.

Арестленĕ диверсантсем çапла кăтартса панă: Америка разведки вĕсене Киевпа Одессăна çитме, пуринчен малтан, пур майсемпе те усă курса, совет çыннисене вĕлерсе те, чăн-чăн совет докуменчĕсем тупма, хăйсене Америка разведки туса панă суя документсене чăн-чăн документсемпе улăштарма, çав документсемпе вара маларах асăннă хуласенче вырнаçма, хăйсене парса янă радиостанцисем пулăшнипе Америкăн Хĕвеланăç Германири разведкин радиоцентрĕпе шифрăсем тăрăх çыхăнма, çапла вара Совет Союзĕнче террорла тата диверсилле ĕçсене пурнăçлас тĕлĕшпе Америка разведкинчен çĕнĕ кăтартусем илме хушса янă.

СССР Шалти ĕçсен министерстви **А. В. Лахно, А. Н. Маков, С. И. Горбунов** тата **Д. Н. Ремига** диверсантсен ĕçне тĕпчесе пĕтерне, маларах асăннă çав çынсен ĕçне пăхса тухма СССР Верховнăй Сучĕн Çар Коллегине панă.

Çак кунсенче СССР Верховнăй Сучĕн Çар Коллегийĕ, Александр Васильевич **Лахно**, Александр Николаевич **Маков**, Сергей Изосимович **Горбунов** тата Дмитрий Николаевич **Ремига** ĕçне пăхса тухса, вĕсем Совет государствине хирĕç пысăк преступленисем тунине шута илсе, «Таван çĕршыва сутакансене, шпионсене, сăтăрçă-диверсантсене вĕлермелле тăвас çинчен» СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1950 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче кăларнă Указ тăрăх, вĕсене чи пысăк наказани памалла—персе вĕлермелле тунă.

Приговора пурнăçа кĕртнĕ. (ТАСС).

Шлак-бетон çуртсем лартăр

Иртнĕ çулсенче республикăри уйрăм колхозсем çурт-йĕр строительствинче шлакпа анлăн усă курчĕç. Шлака цементпа хутăштарса тунă бетонран çирĕп çуртсем лартрĕç. Шлак—тимĕр каяшĕ е çĕркăмрăкĕ çунсан юлакан япала.

Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз пĕлтĕр шлакпа усă курса ĕне витти, 5 автомашина вырнаçмалăх пысăк гараж туса лартрĕ. Шăхасан районĕнчи Маленков ячĕпе тăракан колхоз сысна витин стенисене, Ленин ячĕпе тăракан колхоз силос хывмалли икĕ шăтăк шлак-бетонран тунă.

Çурт-йĕрсем тунă çĕрте шлакпа анлăн усă курма май пуррине, шлак-бетонран тунă çурт йӳне ларнине асăннă колхозсен ĕçĕ лайăх çирĕплетсе парать. Шлак-бетонран тунă çуртсем çирĕп пулаççĕ, вĕсем нумай çул хушши ларма пултараççĕ. Уйрăммăнах фермăсенче выльăх апачĕ пĕçерсе хатĕрлемелли кухньăсене шлак-бетонран лартсан аван. Çавăн пек çурт пăспа нӳрĕпе пĕртте пăсăлмасть. Йывăç кухня час çĕрет, вăл 5—6 çултан ытла лармасть.

Кăçал хăшпĕр колхозсем çуртсене шлак-бетонран лартма хĕллехи вăхăтрах хатĕрленчĕç. Шăхасан районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз 45 тонна цемент илсе хатĕрлерĕ. Елчĕк районĕнчи Ленин ячĕпе тăракан колхоз тата Вăрмар, Канаш, Шăхасан, Шупашкар районĕсенчи уйрăм колхозсем кăçал шлак-бетонран выльăх витисем тата ытти çуртсем лартма хатĕрленеççĕ.

Республикăри промышленность предприятийĕсем тата чугун çул станцийĕсем çывăхĕнче шлак темĕн чухлех илме пулать. Вăл çурт-йĕр тумалли паха материал пулса тăнине колхоз руководителĕсем ăнланма тивĕç, шлакпа анлăн усă курмалла. Вăрмар, Канаш, Шăхасан, Йĕпреç, Улатăр, Вăрнар, Çĕмĕрле, Çĕрпӳ, Шупашкар районĕсенчи колхозсен шлак-бетонран çуртсем лартма лайăх майсем пур. Çав майсемпе колхозсен туллин усă курмалла.

И. СКВОРЦОВ,
Ялпа колхозсенчи строительство ĕçĕсен Управленийĕн начальникĕ.

ЕРТСЕ ПЫРАКАН РАБОТНИКСЕН ПОЛИТИКĂЛЛА ДОКЛАЧĔСЕМ

Массăсене ертсе пымалли тĕп меслет вăл ăнлантарса ĕнентерни пулать. Çак меслетпе усă курнипе ĕнтĕ пирĕн парти ĕççыннисене хуçалăхпа культура строительствинчи задачăсене пурнăçлама пултаруллăн мобилизацилесе пырать.

Партин Шупашкар районĕнчи организацийĕ юлашки вăхăтра, уйрăмах партин XIX-мĕш съезчĕ хыççăн, идеологилле ĕçе чылай лайăхлатрĕ.

Районти пуçламăш парторганизацисем партилле пропагандăпа политикăлла агитацие лайăхлатрĕç, вĕсен идейăлла шайне ӳстерчĕç. Ертсе пыракан работниксем, çавăн пекех коммунистсемпе комсомолецсем тата ялсенчи интеллигентсем те нумайăшĕ идеологилле ĕçе активлăн хутшăнаççĕ.

КПСС райкомĕпе пуçламăш парторганизацисем промышленность предприятийĕсенче, машина-трактор станцийĕнче тата колхозсенче политикăлла докладсемпе лекцисем тăтăшах ирттерме тытăнчĕç. Юлашки тăватă уйăх хушшинче кăна ертсе пыракан работниксем районти ĕççыннисем валли партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсем çинчен 200 доклад, И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕ çинчен 50 доклад ытла ирттернĕ.

Ертсе пыракан работниксенчен чылайăшĕ ĕççыннисене политикăлла докладсемпе лекцисем туса парас ĕçе тăтăшах хутшăнаççĕ. Ку ĕçе парти райкомĕн секретарĕсемпе пайсен заведующийĕсем, пропагандистсемпе инструкторсем, райсовет исполкомĕн членĕсемпе пайсен заведующийĕсем активлăн хутшăнакан пулчĕç. Ертсе пыракан юлташсенчен чылайăшĕ штатра тăман докладчиксемпе лекторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсен ушкăнĕнче 37 çын шутланать. Вĕсенчен кашниех кăçал политика ыйтăвĕсемпе 4—5 докладран кая мар туса панă.

Райкомăн докладчикĕсемпе лекторĕсем тата агитколлективсенче пĕрлешсе тăракан йышлă актив ĕççыннисене партипе правительство решенийĕсем çинчен, Совет Союзĕн тулашрипе шалти лару-тăрăвĕ çинчен, Маленков, Берия, Молотов юлташсем кăçалхи мартăн 9-мĕшĕнче каланă сăмахсем çинчен, СССР Верховнăй Совечĕн IV-мĕш сессийĕ йышăннă законсем çинчен тăтăшах ăнлантарса пареççĕ.

Докладчиксемпе лекторсене политикăлла докладсемпе лекцисен тематикине тăтăшах парса тăратпăр. Вĕсем çав темăсене çутатса пама материалсемпе фактсем пухаççĕ, текст çырса хатĕрлеççĕ. Хатĕрленĕ текстсене докладчиксемпе лекторсен ушкăнĕнче сӳтсе яватпăр, кирлĕ чухне çитменлĕхсене кăтартса паратпăр. Çапла туни докладсемпе лекцисен идейăлла шайне ӳстерме май парать.

Парти райкомĕн секретарĕсемпе бюро членĕсем кашни уйăхрах докладсемпе лекцисем ик-виçшер хутран кая мар ирттереççĕ. Вĕсемпе пĕрлех районти ертсе пыракан ытти юлташсем те политикăлла докладсемпе лекцисем туса парас ĕçе активлăн хутшăнма тытăнчĕç. Ку ĕçре уйрăмах А. Свинцов, А. Васильев, С. Федоров, М. Григорьев юлташсем (райсовет исполкомĕ), шкул директорĕсем А. Николаев, К. Яковлев, И. Иванов юлташсем, МТС директорĕн политика енĕпе ĕçлекен заместителĕ П. Козлов юлташ тăрăшнине палăртмалла.

Докладчиксемпе лекторсем республика, район, предприятисемпе колхозсен пурнăçĕнчен илнĕ фактсемпе туллин усă кураççĕ. Хуçалăхпа культура строительствинчи çитĕнӳсене кăтартакан фактсемпе усă курса, вĕсем пирĕн обществăпа государство стройĕн паха енĕсем çинчен ăнлантарса параççĕ, усă курман майсемпе резервсене тупса палăртма пулăшаççĕ, çитменлĕхсене критиклеççĕ.

Парти райкомĕ, хăйĕн активĕ çине таянса, коммунистсемпе ĕççыннисене хуçалăхпа культура строительствин задачисем çинчен вăхăтра ăнлантарса пама тăрăшать. Ĕççыннисене докладсем туса панипех лăпланса лармасăр юраманни çинчен хăйĕн докладчикĕсене асăрхаттарсах тăрать. Райком вĕсене пуçламăш парторганизацисене пулăшу пама, çитменлĕхсем пулсан, вĕсене мĕнле пĕтермелли çинчен вĕрентме, малта пыракансен опытне анлăн сарса пыма хушать. Докладчиксем, пур чухне те тенĕ пекех, колхозсене е предприятисене кайсан, вĕсенче ĕçсем мĕнле пынипе паллашаççĕ, производство планĕсене тултарасси мĕнле пынине, ĕç дисциплини мĕнле тăнине, социализмла харпăрлăха мĕнле упранине тишкереççĕ. Вĕсем çак тĕллевпе активистсемпе, рядовой çынсемпе калаçаççĕ, çапла майпа ĕçри çитменлĕхсене тупса палăртаççĕ. Çапла вара докладчиксемпе лекторсен вырăнти пурнăçа кăтартса паракан фактсем кирлĕ чухлех пулаççĕ. Вĕсем хăйсен доклачĕсенче темăна вырăнти фактсемпе çыхăнтараççĕ, çитменлĕхсене критиклеççĕ, рабочисемпе колхозниксене ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, дисциплинăна çирĕплетессишĕн тата çитменлĕхсене пĕтерессишĕн кĕрешме мобилизацилеççĕ.

Докладсемпе лекцисен мобилизацилекен вăйĕ пысăк. Акă тĕслĕх. Крупская ячĕпе, Куйбышев ячĕпе тăракан тата «Серп и молот» колхозсенче иртнĕ çулсенче ертсе пыракан работниксем докладсем сахал ирттернĕ. Ку колхозсенче массăлла ĕç çителĕксĕр пулнă, çавна пула вĕсем чылай ĕçсенче ытти колхозсенчен юлса пынă.

Кăçал çак çитменлĕхе пĕтернĕ. Ертсе пыракан работниксем асăннă колхозсенче юлашки тăватă уйăх хушшинче кăна ултшар е вуншар доклад ирттерчĕç. Колхозниксем хушшинчи политикăлла ĕçе эпир артель хуçалăхне тĕреклетес, ялхуçалăх артелĕн Уставне пăснисене пĕтерес, государство планĕсене пурнăçламалла тăвас тĕллевпе туса пытăмăр. Халĕ ĕнтĕ ку колхозсем хăйсен ĕçĕсене палăрмаллах лайăхлатрĕç. Паллах, çак ӳсĕме тума массăлла ĕçе вăйлатни чылай пулăшрĕ.

Районти ĕççыннисем хушшинче идеологилле ĕçе вăйлатни хуçалăхра чылай çитĕнӳсем тума май пачĕ. Иртнĕ çулхине государствăна тĕштырă памалли плана тата ытти ялхуçалăх продукчĕсем памалли обязательствăсене район малта пыракан ытти районсемпе пĕр танах тултарчĕ. Кăçал вăрман хатĕрлемелли плана район республикăра чи малтан пурнăçларĕ. Районти колхозсем строительство материалĕсем сахал мар хатĕрлерĕç, халĕ обществăлла çуртсем нумай тума тытăнчĕç. Колхозсем çуракине ăнăçлăн хатĕрленсе кĕтсе илчĕç, халĕ уй-хир ĕçĕсене анлăн туса пыраççĕ.

Çапах та политикăлла докладсемпе лекцисем ирттерес ĕçре пирĕн çитменлĕхсем те пур. Совет çыннисен политикăлла пĕлĕвĕсемпе культурăлла шайĕ ӳссех пырать. Çакă вăл парти райкомĕпе пуçламăш организацисене ĕççыннисем хушшинчи идейăлла-политикăлла ĕçе лайăхрах та витĕмлĕрех туса пыма хушать. Политикăлла доклад ĕççыннисене воспитани памалли паха май пулса тăрать.

Анлă пулин те, хăшпĕр парторганизацисемпе колхозсенче политикăлла докладсем халĕ те сайра-хутра кăна пулаççĕ. Çапла, сăмахран, Карл Маркс ячĕпе, Киров ячĕпе, Мичурин ячĕпе тăракан тата ытти хăшпĕр колхозсенче райком докладчикĕсем кăçал пурĕ те пĕрер е икшер доклад кăна туса панă. Çав вăхăтрах ертсе пыракан работниксем ку колхозсенче сахал мар пулнă, вĕсен докладсем туса пама май та пулнă. Хăшпĕр юлташсем, райком хушнă пулин те, ĕççыннисем хушшинче докладсем сахал тăваççĕ. Райком вĕсен çак йăнăшне вăхăтра тӳрлетменнине пысăк çитменлĕх тесе шутлас пулать.

Массăсем хушшинче политикăлла ĕç туса пырасси ертсе пыракан кашни работникăн чи пирвайхи обязанноçĕ пулса тăрать. Пирĕн ертсе пыракан кадрсем ĕççыннисен пухăвĕсенче докладсем тăтăшах ирттерчĕр — акă мĕнле задача тăрать райком умĕнче. Çапла тусан кăна парти организацийĕсен идеологилле ĕçне анлăн сарса пыма пулать.

Хăшпĕр юлташсем вырăна çитсе докладсене хăвăрт вуласа панинех ĕçĕ пĕтнĕ тесе шутлаççĕ. Вĕсем предприяти е колхоз пурнăçĕпе паллашмаççĕ, вырăнти фактсене илсе кăтартмаççĕ. Çавнашкал докладсем идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра иртменни, вĕсем хăйсен тĕллевĕ патне çитейменни паллах ĕнтĕ. Çак çитменлĕхсене комсомол райкомĕн секретарĕсем Евлампьевпа Миролюбова, районти культура çурчĕн директорĕ Алекванцев, райпотребсоюз председателĕ Вилков юлташсем тунă. Ку çитменлĕхсемех хăшпĕр парторганизацисем çумĕнчи агитколлективсенче те пулкалаççĕ. Политикăлла ĕçĕн тĕп задачи — ĕççыннисене коммунизм строительствин задачисене ăнăçлăн пурнăçлама мобилизацилесси пулать.

Политикăлла доклада идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттермелле. Ăна кулленхи задачăсемпе тачă çыхăнтарса туса парас пулать. Çакна манса, хăшпĕр докладчиксем партипе Совет правительствин политики çинчен кирлĕ пек ăнлантарса памаççĕ, докладсене кичем ирттереççĕ. Çакăншăн парти райкомĕ те айăплă. Чăн та, райком докладчиксемпе лекторсене, агитколлектив руководителĕсене тата агитаторсене пухусемпе семинарсене тăтăшах пухма тăрăшать. Анчах çак ĕçсем кирлĕ результат панă тесе калама иртерех-ха.

Буржуалла идеологи палăрăмĕсене пĕтерес, çынсен ăс-тăнне капитализм юлашкисенчен тасатас тĕлĕшпе, ĕççыннисене Тăван çĕршыв умĕнчи тивĕçе куллен туйса тăма тата социализмла пурлăха кирлĕ пек сыхласа усрама воспитани парас тĕлĕшпе районти парти организацийĕ пысăк ĕçсем туса ирттерет. Çав вăхăтрах, хăшпĕр çĕрте обществăлла пурлăха çаратни, хуçалăха тирпейсĕр ертсе пыни çинчен калакан фактсем пур. Анчах çав çитменлĕхсене хăшпĕр лекторсем тивĕçлипе тăрă шыв çине кăлармаççĕ.

Ĕççыннисене çав çитменлĕхсене хирĕç пĕтĕм вăйпа кĕрешме мобилизацилени кирлĕ. Çитменлĕхсен сиенлĕхне кашни ĕççынни пĕлсе тăтăр, вĕсене хирĕç ним шеллемесĕр кĕрештĕр. Çакна куллен асра тытса, кашни докладчикпа агитаторăн хăйсен витĕмлĕ те хĕрӳллĕ сăмахĕсемпе совет çыннине общество умĕнчи тивĕçе кирлĕ пек пурнăçлама хавхалантарса пыни кирлĕ.

Парти райкомĕ штатра тăман лекторсемпе докладчиксен составне лайăхлатас, вĕсене пулăшас ĕçе вăйлатса пырать. Вĕсем валли инструктивлă докладсемпе лекцисем тăтăшах пулаççĕ. Ертсе пыракан работниксем парти райкомĕ çумĕнчи семинар занятийĕсене çӳреççĕ.

Политикăлла докладсене витĕмлĕ, куллен туса пыни районти ĕççыннисене хуçалăхпа культура строительствин задачисене ăнăçлă пурнăçлама мобилизацилĕ.

А. ВОРОНОВ,
КПСС Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Хамăр республикăра

Шкулсенчи экзаменсем

Экзаменсен малтанхи итогĕсем

Сак кунсенче Чăваш АССР Сутĕç министерстви республикăри шкулсенчи экзаменсен малтанхи итогĕсене пăхса тухрĕ.

Кăçал республикăра 138 пине яхăн ача пĕр класран тепĕр класа куçмалли тата вĕренсе тухмалли экзаменсем параççĕ. Малтанхи кунсен итогĕсем çакна кăтартаççĕ: республикăри шкулсенче экзаменсем йĕркеллĕ пуçланчĕç. Нумай ачасем вĕренӳре тарăн пĕлӳ илнине кăтартаççĕ.

Шупашкарти 9 вăтам шкулта 10-мĕш классенче 194 ача вĕреннĕ. Вырăс чĕлхипе тата литературипе çыру ĕçĕ туса 137 вĕренекен «5» тата «4» паллă илнĕ. Япăх паллă илни пĕр ача та çук. Улатăрти, Кувакинăри, Пăрачкаври, Шупашкар районĕнчи вăтам шкулсенчи 10-мĕш классенче вĕренекенсем те лайăх паллăсем кăна илнĕ.

Кувакино, Муркаш районĕсенчи 4-мĕш, 5-мĕш, 6-мĕш, 7-мĕш классенче вĕренекенсем те малтанхи экзаменсене ăнăçлă тытрĕç.

Çавăнпа пĕрлех экзаменсем ирттерес енĕпе çитменлĕхсем те палăрнă. Хăшпĕр çĕрте экзамен ирттермелли инструкцие пăснă. Чылай шкулсем ачасене экзамен тытма çителĕклĕ хатĕрленмен. Уйрăм учительсем вĕрентӳпе воспитани ĕçне тивĕçлипе хакламан. Çавна пула та ĕнтĕ нумай вĕренекенсем хăшпĕр предметсемпе япăх паллăсем илнĕ. Первомайски районĕнчи Пӳртлĕ Шăхальти, Красноармейски районĕнчи Тусайри пуçламăш шкулти 4-мĕш классенче вĕренекенсенчен çурри вырăс чĕлхипе çыру ĕçĕшĕн япăх паллă илнĕ.

Канаш районĕнчи Яманкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкулти, Çĕмĕрле районĕнчи Мăн Улхашри вăтам шкулти, Советскинчи вăтам шкулти тата ытти хăшпĕр шкулсенчи 5-мĕш классенче вĕренекенсем арифметикăпа начар пĕлӳ илнĕ.

Пĕрремĕш экзаменсем çакна кăтартса параççĕ: хăшпĕр шкулсенче политехникăлла вĕренĕвĕн элеменчĕсемпе сахал усă курнă. Çавна пула вĕренекенсен лаборатори ĕçĕсем, опытсем тăвас тĕлĕшпе практикăлла хăнăху тата пĕлӳлĕх сахал.

Хăшпĕр шкулсене ертсе пыракансем ответлăха туймасăр экзаменсем ирттермелли инструкцие пăснинчен те курăнать. Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Чăрăшкассинчи çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Яковлев юлташ экзаменсем ирттермелли кун йĕркине хăй тĕллĕн улăштарнă. Майăн 20-мĕшĕнче арифметика вырăнне вырăс чĕлхипе экзамен ирттернĕ.

Сĕнтĕрвăрринчи çамрăк рабочисен вăтам шкулĕн директорĕ Петров юлташ 7-мĕш класра изложенипе экзамен ирттермелли пакет вырăнне арифметикăпа ирттермелли пакета уçнă. Улатăр районĕнчи Иванькова-Удельнăйĕнчи пуçламăш шкулта диктант çырмалли урăх вариантăн пакетне уçнă.

Хăшпĕр çĕрте ачасем экзаменсене вăхăтра пыманни те палăрнă. Уйрăм шкулсенче каласа тытмалли экзаменсене вĕренекенсем кĕнекесем илсе пынă, вĕсемпе усă курма пăхнă.

Чурачăк районĕнчи Метикассинчи вăтам шкулта, Ишлей районĕнчи Мишерти пуçламăш шкулта тата ытти хăшпĕр шкулсенче экзаменра ачасен пĕлĕвĕсене ытлашши ӳстерсе хакланă. Уйрăм педагогсем çыру ĕçне тĕрĕсленĕ чухне йăнăшсене астуман, каласа тытмалли экзаменсенче ачасене тĕрлĕ ыйтусем парса пăтраштарнă. Çапла вара вĕренекенсем билет тăрăх йĕркеллĕ ответлеймен.

Сак çитменлĕхсем экзаменсене мĕнле ирттернине сутĕç пайĕсемпе шкулсене ертсе пыракансем начар тĕрĕсленĕ пирки пулнă. Вĕсем экзаменсенче хăйсем пулман, шкулсенче экзаменсем мĕнле майпа пулса иртнине, учительсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене тата ачасем материала мĕн чухлĕ пĕлнине тĕплĕн тĕпчесе вĕренмен.

Сутĕç министерстви çакна палăртнă: хăшпĕр ассистентсемпе комисси членĕсем экзаменсенче активлăх кăтартмаççĕ, мĕн асăрханине çырса пымаççĕ, выводсем тумаççĕ. Ку вăл шкулсенче вĕренӳ çулĕн итогĕсене пăхса тухнă чухне кирлĕ материала пухма тăрăшманнине кăтартать, вĕрентӳпе воспитани ĕçне лайăхлатма пулăшмасть.

Уйрăмах начар пĕлӳ кăтартнă классен экзаменри результачĕсене тарăнрах тĕпчесе пĕлни кирлĕ. Ачасем начар пĕлӳ илнин сăлтавĕсене тупса, вĕсене çитес вĕренӳ çулĕнче пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлемелле.

Стена хаçат редакторĕсемпе ялкорсен канашлăвĕ

КОМСОМОЛЬСКИ. Стена хаçат редакторĕсемпе ялкорсен районти канашлăвĕ пулчĕ. Канашлура И. Квасов юлташ районти «Октябрь ялавĕ» хаçат ĕçĕсем çинчен доклад туса пачĕ.

Доклад тăрăх çичĕ çын тухса калаçрĕ. Вĕсем редакци ĕçĕнчи çитĕнӳсемпе пĕрлех çитменлĕхсене те кăтартса пачĕç.

Хаçата колхоз председателĕсем, уйхир бригадирĕсем, ферма заведующийĕсем, ялхуçалăх специалисчĕсем сахал çыраççĕ. Хаçат страницинче шкулсем пурнăçĕ çинчен, медицина, культурăпа сутĕç учрежденийĕсен тата ял Совечĕсен ĕç опычĕ çинчен çырнă статьясем сайра хутра çеç курăнкалаççĕ. Редакци колхозсенчи стена хаçат редакторĕсене сахал пулăшать, ялкорсемпе сахал ĕçлет.

Прение тухса калаçакансем районти хаçат ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе паха сĕнӳсем пачĕç.

П. ГЛАДКОВ.

Торфяниксен ăмăртăвĕ

Атăл леш енчи торф предприятийĕнче участоксем, бригадăсем тата уйрăм рабочисем хушшинче социализмла ăмăрту анлă саралнă.

Ăмăртура Елизавета Тимофеева юлташ ертсе пыракан бригада уйрăмах лайăх тĕслĕх кăтартать. Норма тăрăх сменăра 44.000 торф кирпĕчĕ кăлармалла. Бригада 50.000 кирпĕч хатĕрлет. Бригада директципе торфкомăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă.

Агитаторсем, инженерсемпе техниксем малта пыракан бригада опычĕпе ыттисене паллаштараççĕ. Рабочисем тунă çитĕнӳсемпе лăпланса лармаççĕ, тухăçлăрах ĕçлеме тăрăшаççĕ. Кăтарту хăми çине кашни кун бригадăсем сменăри задание мĕнле пурнăçланине çырса пыраççĕ. Торф кăлармалли плана срокчен тултарассишĕн социализмла ăмăрту мĕнле пынине «За торф» стена хаçатĕнче тата боевой листоксенче тăтăшах çутатаççĕ.

Малтанхи кунсенче Н. Фасхутдинова тата Л. Захарова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем задание тултарса пырайман. Е. Тимофеева юлташ ертсе пыракан бригада опычĕпе паллашнă хыççăн, вĕсем те тухăçлă ĕçлеме пуçланă. Май уйăхĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче бригадăсен 380-шар тонна торф кăлармалла пулнă. Н. Фасхутдинова юлташ ертсе пыракан бригада 393 тонна, Л. Захарова юлташ ертсе пыракан бригада 402 тонна торф кăларнă.

Сосновка поселок Совечĕн депутачĕ В. Андреева тата Ф. Золовăпа С. Кузьмина юлташсем ертсе пыракан бригадăсем те тухăçлă ĕçлеççĕ. Торфяниксем сезонти плана 10 кун маларах тултарассишĕн, планран ирттерсе 5 пин тонна торф хатĕрлессишĕн кĕрешеççĕ.

Н. АЛЕКСЕЕВ.

Планран ирттерсе—продукци

ПАРАЧКАВ. Кунти йĕтĕн завочĕ пир-авăр промышленноçне пысăк пахалăхлă сӳс парать. Йĕтĕне Пăрачкав, Çĕмĕрле, Калинино тата ытти районсенчи колхозсем леçсе параççĕ.

Завод коллективĕ пысăках мар. Апла пулин те вăл тăрăшса ĕçлесе промышленность валли паха продукци туса кăларать. Завод кăçал уйрăмах лайăх ĕçлет, плана уйăхран-уйăха ирттерсе тултарать. Пĕрремĕш квартал планне 204 процент пурнăçланă. Юлашки вăхăтра завод коллективĕ тата лайăхрах ĕçлеме пуçларĕ. Производство планне ирттерсе пурнăçланипе пĕрлех, продукцин хăйне ларакан хакне чылай йӳнетнĕ.

Заводри паллă работницăсем А. Лисина, Д. Гаранина тата З. Шарова юлташсем ертсе пыракан бригадăсем кашни уйăхри задание икĕ хут ирттерсе пурнăçласа пыраççĕ.

В. ТОНЫШЕВ.

Çул çинче ĕçлеççĕ

СĔНТĔР. «Новая Юнга» колхозри А. Тепеев юлташ ертсе пыракан çул-йĕр бригади ĕçе тытăнчĕ. Бригада Юнгă шывĕ урлă çĕнĕ кĕпер хывнă. Халĕ ял хушшипе çырмаллă вырăнсенчи çулсене юсаççĕ.

«Колос» ялхуçалăх артелĕн членĕсем те çул юсама тухнă, строительство материалĕсем турттарма тытăннă.

А. СОЛОВЬЕВ.

* * *

КӲКЕÇ. «Правда» колхоз членĕсем ял çывăхĕнчи çулсене юсарĕç. Шупашкарпа Çăкалăх хушшинчи çула та виçĕ километр тăршшĕ якатса тухрĕç. Кăкшăм шывĕ урлă хывнă кĕпере свайсем çапса тĕреклетрĕç.

Колхоз кăçал çĕнĕ кĕпер тума палăртнă. Халĕ çав кĕпер валли йывăç турттараççĕ.

Н. ВАСИЛЬЕВ.

Етĕрнери педагогика училищинче темиçе çул ĕнтĕ физкультура преподавателĕсем вĕрентсе хатĕрлекен уйрăм ĕçлет. Кăçал çак уйрăмран 36 çын вĕренсе тухать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Техникумран кăçал вĕренсе тухакансем занятире.

Г. ЗИНЬКОВ фотоӳкерчĕкĕ.

Чĕререн тухакан сăмахсем

Редакцие вата хĕрарăм килсе кĕчĕ. Хăй туяпа, хуллен утать.

— Кама çыртарас-ши, Иван Николаевича чĕререн тав туса ăшă сăмах çыртарасчĕ,—терĕ вăл хăйпе тĕл пулнă редакци сотрудникне.

Эпир унпа калаçса кайрăмăр.

— Каçарăр ывăлăм, хутла пĕлместĕп, ĕлĕк вĕренеймесĕрех юлнă. Тем пек тав туса çырăттăм Иван Николаевича. Мана вилĕмрен çăлса хăварчĕ вăл. Паян хула урамĕпе çынсем çине пăхса утатăп та çĕнĕрен çуралнă пекех туйăнать. Пурнăç ытла та хаклă. Тавтапуç тухтăрсене, маншăн, вата чăваш карчăкĕшĕн çавăн пек тăрăшнăшăн,—тет вăл.

Анастасия Титовна Ходяшева Ишлей районĕнчи Мишер ялĕнчен. Ситмĕл çичĕ çулта вăл. Чылай вăхăт чирлесе пурăннă. Икĕ уйăх каярах ăна Шупашкарти больницăна гинекологи уйрăмне сывалма вырттарнă.

— Больницăра чирлĕ çынсене питĕ лайăх пăхаççĕ,—тет А. Т. Ходяшева.—Унта сыватма тăрăшаççĕ. Врачсем, пире пăхакан сестрасем кашнинпе ăшă кăмăлпа калаçаççĕ. Вăхăтра çитереççĕ, эмел параççĕ, таса тытаççĕ. Вĕсем тăрăшнине курса чирлĕ çыннăн сывалас шанăçĕ, хавасланĕ ӳсет. Эпĕ вата ĕнтĕ, çамрăк чухне те чирлекеленĕ. Анчах ĕлĕк пирĕн пек ватăсене, уйрăмах хресчен çыннине сыватасшăн тăрăшман. Укса нумай кирлĕ пулнă. Халĕ пĕр пус илмесĕр çитерчĕç, сыватрĕç. Тавтапуç Совет влаçне. Манăн чĕререн тухакан çак ăшă сăмахсене тархасшăн пĕлтерĕр больницăра ĕçлекенсене.

Вата хĕрарăм хăйĕн савăнăçне каласа пама темĕн тĕрлĕ ăшă сăмахсем асăнать. Хăйне пăхакансене, сыватакансене, Совет влаçне тав тăвать.

Хăйсене сыватнăшăн, больницăра лайăх пăхнăшăн врачсене, сестрасене ытти медицина работникĕсене чĕререн тав туса çырнă çырусем редакцие тăтăшах килеççĕ. Çав çырусенче ĕççыннисем пирĕн çĕршывра халăх сывлăхĕшĕн куллен тăрăшнăшăн партипе правительствăна, врачсене чĕререн тав тăваççĕ.

«Кăçал манăн арăм Х. Петрова сасартăк чирлесе ӳкрĕ,—тесе çырать Октябрьски районĕнчи Чăнкасси ялĕнчен Т. Петров колхозник.—Ăна Октябрьскине больницăна илсе кайрăм. Иван Петрович хирург пĕр тăхтаса тăмасăр операци турĕ. Халĕ арăм сыва пурăнать. Вилĕмрен çăлса хăварнăшăн Иван Петровичпа Дария Васильева врачсене тата чирлĕ çынсене пăхакансене тем пекех мухтаса тав тăватăп».

«Эпĕ фронтра чирленĕ пирки темиçе çул хушши нерв чирĕпе аптрарăм,—тесе çырать К. Мижиков.—Сывалас тесе Шупашкарти поликлиникăна пытăм. Унта мана ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Икĕ уйăх больницăра выртнă хыççăн питĕ лайăх туятăп. Мана лайăх сыватнăшăн А. Г. Макарова врача тата физио-терапевтически уйрăмра ĕçлекенсене чĕререн тав тăватăп».

Çакăн пек çырусем редакцие час-часах килеççĕ. Ĕççыннисем хăйсене сыватнăшăн, халăх сывлăхне сыхлассишĕн куллен тăрăшнăшăн партипе правительствăна чун-чĕререн тав тăваççĕ.

Н. МИНИН.

Çĕрулминчен тунă силос

Иртнĕ çулта пирĕн колхоз пысăк тухăçлă çĕрулми туса илчĕ. Анчах та эпир çĕрулмине хурса усрама кирлĕ таран вырăн хатĕрлеме ĕлкĕреймерĕмĕр. Çапла вара пирĕн умма çĕрулми çĕрсе, шанса пĕтес хăрушлăх тухса тăчĕ. Çак инкекрен хăтăлас тесе, кăларнă пек çĕрулмине пĕçерсе силос хывса пытăмăр. Лайăх çуса тасатса силосланă çĕрулми çĕрсе сая каймасть, нумай çул хушши сыхланса усранма пултарать.

Çуркунне уçса пăхсан, çĕрулминчен тунă силос лайăх пулни палăрчĕ. Ăна пур выльăхсем те юратса çиеççĕ.

Кăçал колхоз çĕрулмине пĕçермесĕрех силосламa хатĕрленет. Пĕçермен çĕрулмине силосласси йывăр ĕç мар. Ăна пур колхозсенче те тума пулать. Стенине цементпа çирĕплетнĕ шăтăка е башня ăшне 15—20 сантиметр хулăнăш çĕрулми тултармалла та, çивĕч тимĕр кĕреçепе тӳсе вĕтетмелле. Çапла башня е шăтăк тулса çитиччен сий хыççăн сий çĕрулми хурса кĕреçепе тӳмелле. Кĕреçепе тӳсе вĕтетнĕ çĕрулми кăпăкланма пуçлать. 4—5 талăкран вăл кăпăк сӳнсе пĕтет. Вара çĕрулмине йывăç ывăспа витмелле те, тăпрапа хуплаçа сывлăш кĕмелле мар тата сивĕ тивмелле мар тумалла.

Çĕрулмине чĕрĕлле силослани пур колхозсемшĕн те усăллă. Вара çĕрулмине хума вырăн сахал кирлĕ тата пĕçерсе вутшанкă пĕтмест.

И. ВНУЧКОВ,
Канаш районĕнчи «Коминтерн» колхоз председателĕ.

Юрă праçникне хатĕрленеççĕ

Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ типографи хорне икĕ çул каялла йĕркеленĕ. Халĕ çак коллективра 30 çын ытла.

Хор репертуарĕ пысăк. Унта вырăс, чăваш тата ытти халăхсен юррисем пур. Солистсем вырăс композиторĕсен юррисене ăста юрлаççĕ. Çавăн пекех халăх демократи çĕршывĕсенчи композиторсен юррисем те репертуарта тивĕçлĕ вырăн йышăннă.

Типографири хор коллективĕн ĕçне малалла аталантарса пыма комсомол тата профсоюз организацийĕсем тăтăшах пулăшаççĕ.

Хор коллективĕ ĕçлеме пуçланăранпа 25 хутчен концерт панă. Нумаях пулмасть кружок членĕсем Ивановăри кирпĕч заводĕнче концерт пачĕç. Заводра вĕсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илчĕç. Сывă кунсенчех Çĕрпӳ, Ишлей, Шупашкар районĕсенчи колхозсенче концертсем памалла.

Хальхи вăхăтра хор коллективĕ хĕрсех юрă праçникне хатĕрленет. Праçник тĕлне çĕнĕ юрăсем вĕренеççĕ.

А. КРАСНОВ.

Фермăсенчи ĕççене механизацилени

Фермăсенчи йывăр ĕççене механизацилесси çултан-çул ӳссе пырать. 1950 çулта пирĕн республикăри икĕ колхозра кăна выльăх-чĕрлĕх фермисенче водопровод пулнă. Кăçал вара 70 ытла колхозра фермăсене водопровод кĕртнĕ. Çĕнĕ çулччен тата 40 колхозра выльăх-чĕрлĕх фермисене водопровод кĕртеççĕ.

Фермăсенчи йывăр ĕççене механизацилес тĕлĕшпе Шăхасан районĕнчи Киров ячĕпе, Ленин ячĕпе тăракан, «Правда» тата ытти колхозсем те малта пыраççĕ. Çак районта пурĕ 14 колхозра выльăх-чĕрлĕх фермисенчи йывăр ĕççене механизациленĕ.

Н. МАЛЬЦЕВ.

Санаторисемпе канмалли çуртсене

Республикăри вырăнти промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсем кашни çулах санаторисемпе канмалли çуртсене нумай каяççĕ. Çак кунсенче темиçе çын Ильинкăри канмалли çурта тухса кайрĕç. Унсăр пуçне, Крымри, Кавказри курортсемпе санаторисенче вун-шар çын канать.

Вырăнти промышленность предприятийĕсенче ĕçлекенсен профсоюзĕн обкомĕ кăçал санаторисемпе курортсене тата канмалли çуртсене яма 215 путевка илнĕ. Çакна валли профсоюз енĕпе 115 пин тенкĕ укса уйăрса панă. Çавăн пекех рабочисемпе служащисен ачисем валли пионер лагерĕ уçаççĕ. Лагерь валли 50 пин тенкĕ укса уйăрнă.

А. АЛЕКСЕЕВ.

Тĕрĕ тĕрлекенсем

ÇĔРПӲ. Кунти профессилле-техникăлла шкул кашни çулленех чылай специалистсем вĕрентсе кăларать.

Çак кунсенче шкултан тĕрĕ тĕрлекенсен çĕнĕ ушкăнĕ вĕренсе тухрĕ. 28 хĕрача вĕренсе тухрĕ. Вĕсене пурне те мастер ятне панă. Шкулта лайăх вĕреннĕ З. Цветкова юлташа племлĕ тĕрĕ инструкторĕ ятне панă.

Вĕренсе тухнисенчен чылайăшĕ хамăр республикăри артельсенче ĕçлемелле.

Х. ЛИСИН.

Редакцие килнĕ çыру

Шантарнă лекторсем килмерĕç...

Янташри библиотека иртнĕ çулхи июлĕн 1-мĕшĕнче кăна ĕçлеме тытăнчĕ. Унччен кунти колхозниксем шкулти библиотекăран кĕнекесем илсе вуланă. Çĕнĕ библиотекăра халĕ 1.728 кĕнеке, вулакансен шучĕ икçĕр çынна çитнĕ.

Кĕнекесене уйрăмах çамрăксем ытларах вулаççĕ. Кăçалхи январь уйăхĕнчен пуçласа ку таранччен Виталий Мидуков 46 кĕнеке, Илья Лукин—28 кĕнеке, Василий Мидуков 22 кĕнеке илсе вуланă. Библиотекăра 65 çулхи Федор Захарович Захарова час-часах курма пулать. Вăл та кăçал 10 кĕнеке вуласа тухрĕ.

Пирĕн лайăх клуб пур. Унта эпир час-часах спектакльсем кăтартатпăр. Март уйăхĕнче Г. Николаева çырнă «Жатва» роман тăрăх вулакансен конференцине ирттертĕмĕр. Унта 43 çын пулчĕ.

Çак фактсем пурте колхозлă ял культури ӳссе пыни çинчен, колхозлă ял çыннисем ытларах вĕренме, ытларах пĕлме тăрăшни çинчен калаççĕ.

Анчах эпир ирттерекен ĕçсем çителĕксĕр-ха. Паянхи кун требованийĕ пысăк. Колхозниксене тĕнчере тата хамăр Тăван çĕршывра мĕн пулса иртни, ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳсем, наука ӳсĕмĕсем интереслентереççĕ. Вĕсем çак темăсемпе квалификациллĕ лекцисем итлесшĕн. Вĕсен ыйтăвне тивĕçтерес тесе эпир малашнехи ĕç планне тунă чухне лекцисемпе докладсем ирттерме палăртатпăр. Анчах лекторсем çуккине пула пирĕн палăртнă мероприятисем пурнăçланмасăрах юлаççĕ. Пирĕн яла Хутарти лекторсен ушкăнĕ çумне çирĕплетнĕ. Анчах хĕл каçа та пĕр учитель те килсе лекци вуласа памарĕ.

Пулăшу ыйтса эпир кăçалхи февралĕн 10-мĕшĕнчех Тукасри вулав çурчĕн заведующийĕ Курбаков юлташпа КПСС райкомĕн пропагандăпа агитаци пайне çыру та çырса пăхрăмăр, кайса та калаçрăмăр.

Пропагандăпа агитаци пайĕн заведующийĕ Е. Столярова юлташ пире:

— Асрах тытăпăр, çитес кунсенче сирĕн патăра лектор яратпăр,—тесе лăплантарса кăларса ячĕ. Унтанпа виçĕ уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ, пирĕн яла çаплах пĕр лектор та ура ярса пусмарĕ-ха.

Столярова юлташ яма пулнă лекторсене эпир кĕтсе илейĕпĕр-ши?

В. АЛЬЦЕВ,
библиотека заведующийĕ.
Çĕмĕрле районĕ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

„Малта пыракансен опытне тăрăшса сармалла"

Апрелĕн 7-мĕшĕнче «Коммунизм ялавĕ» хаçатра «Малта пыракансен опытне тăрăшса сармалла» ятлă статья пичетленсе тухнăччĕ. Статьяра Йĕпреç районĕнче малта пыракан колхозниксен опытне сарас тĕлĕшпе сахал ĕçленине кăтартса панăччĕ.

Йĕпреç райкомĕ статьяра кăтартнă çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ решенисем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

„Суйлавçăсен наказĕсем"

Кăçалхи февралĕн 17-мĕшĕнче пирĕн хаçатра И. Тенюшев çырнă «Суйлавçăсен наказĕсем» ятлă корреспонденци пичетленнĕччĕ. Тĕрĕсленĕ хыççăн унта кăтартнă фактсем чылайăшĕ тĕрĕс пулни палăрнă.

Анчах та корреспонденцире автор МТС-ăн Михайлов юлташ ертсе пыракан бригади Чкалов ячĕпе тăракан колхозра авăн çапас тĕлĕшпе начар ĕçлет тесе тĕрĕс мар çырнă. Трактор бригади колхозра авăн çапмалли плана 256 процент пурнăçланă.

Кулен кирлĕ таварсем ытларах туса кăларар

Коммунистсен партийĕн XIX съезчĕ вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин предприятийĕсенче кулен кирлĕ таварсем, килте тата хуçалăхра усă курмалли япаласем, вырăнти строительство материалĕсем туса кăларассине чылай сарма палăртрĕ. Съезд вырăнти Советсене промышленноçпа промысла кооперацине ертсе пырас ĕçе лайăхлатма хушрĕ.

Съезд решенийĕсемпе кăтартăвĕсене ĕççынни депутачĕсен Çĕмĕрле район Совечĕ мĕнле пурнăçласа пырать-ха? Пирĕн районта икĕ промкомбинат, апат-çимĕç комбиначĕ, кирпĕч завочĕ, чылай промартельсемпе мастерскойсем пур. Вĕсем çулталăкра 18 миллион тенкĕлĕх ытла тĕрлĕ йышши япаласем туса кăлараççĕ. Районта чĕртавар, топливо нумай. Предприятисенче оборудовани, ĕç вăйĕ çителĕклĕ. Производствăна лайăхрах йĕркелесен, шалти резервсемпе туллин усă курсан, малта пыракансен опычĕпе меслетне анлăн сарса пырсан, район халăха кулен кирлĕ япаласем тата нумайрах туса кăлармă, продукци пахалăхне лайăхлатма, таварсен хăйне ларакан хакне йӳнетме пултарать.

Райсовет исполкомĕ предприятисемпе промартельсен ĕçĕпе кулен интересленет, вĕсен руководителĕсене çитменлĕхсемпе чăрмавсене çийĕнчех пĕтерсе пыма пулăшать, вырăнти чĕртаварпа лайăхрах усă курма тăрăшать. Вырăнти Советсен суйлавĕ вăхăтĕнче суйлавçăсем кулен кирлĕ таварсен пахалăхне лайăхлатма сĕнӳ панăччĕ. Ĕççыннисен сĕнĕвне пурнăçлас тесе, районти предприятисемпе промартельсем туса кăларакан япаласен смотрне ирттертĕмĕр. Унта çĕршер рабочи, колхозник, суту-илӳ работникĕсем, кил хуçи хĕрарăмĕсем, çамрăксем пулчĕç, продукци пахалăхне лайăхлатма паха сĕнӳсем чылай пачĕç. Смотр хыççăн чылай предприятисемпе промартельсем продукци пахалăхне лайăхлатрĕç.

Çĕмĕрле хулинче союзла министерствăсене пăхăнса тăракан предприятисем пур. Вĕсем хăватлă техникăпа хĕçпăшалланнă, малта тăракан технологипе, наукăпа техникăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемпе усă кураççĕ. Вĕсен паха опычĕпе тата меслечĕпе вырăнти промышленноçпа промысла кооперацин работникĕсене паллаштарас тесе, ятарласа семинарсем ирттеретпĕр. Пĕр семинара сĕтел-пукан комбинатĕнче ирттертĕмĕр.

Предприятисем шалти резервсемпе лайăхрах усă курма тытăнчĕç, чылай йывăр ĕççене механизацилерĕç. Çĕмĕрлери райпромкомбинат сĕтел-пукан цехĕ валли çĕнĕ çурт лартрĕ, сушилка турĕ, çĕнĕ станоксем туянса ĕçе ячĕ. Рационализаторсем нумай операцисене механизацилеме паха сĕнӳсем пачĕç. Çав сĕнӳсене пурнăça кĕртни çулталăкра 100 пин тенкĕ перекетлеме май парать.

Асăннă райпромкомбинатпа Мисчĕри райпромкомбинат коллективĕ ăмăртса ĕçлет. Юлашки çичĕ уйăх хушшинче çак предприяти плана тăтăшах тултарса пырать. Унăн коллективĕн творчествăлла активлăхĕ ӳссе пынине кăтартакан тĕслĕхсем нумай. Стахановецсемпе рационализаторсем сĕнни пе кунта вут сыппинчен ещĕк тата сĕтел-пукан деталĕсем туса кăларма тытăннă. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта райпромкомбинат 500 кубометр ытла вутăран паха детальсем туса хатĕрленĕ, çавна пула планран ирттерсе 30 пин тенкĕ тупăш тунă. Райпромкомбинат дирекцийĕ кулен кирлĕ таварсем туса кăларассине аталантарма, кирпĕч цехĕ уçма палăртнă.

Кăçал «Лесоруб» тата «Обод» промартельсем кирпĕч тума тытăнчĕç. «Красный Октябрь» промартель тӳме тăвакан цеха механизацилерĕ. Халĕ вăл механизациленĕ тимĕрçĕ цехĕ тăвать. Унта пысăк предприятисен каяшĕнчен халăха тата колхозсене кирлĕ япаласем туса кăларма палăртнă. Нумаях пулмасть артель çĕвĕ машинисем юсакан, сăмаварсемпе хурансен ăшне тăхлан витекен мастерской уçрĕ.

Сăв хĕрринче хулă нумай. Инвалидсен «Партизан» артелĕ хăваран корзинкăсем туса кăларма хатĕрленет.

Апат-çимĕç комбиначĕ çултан-çул аталанать. Халĕ вăл, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут нумайрах продукци туса кăларать. Тутлă шывсем тăвакан цеха туса пĕтерсе ĕçе ярсан, продукци туса кăларасси виçĕ хут ӳсет. Вăл хăвăрт аталанни сад чĕртнинчен, вырăнти чĕртаварпа анлăн усă курнинчен нумай килет. Комбинат садĕнче 750 тĕп панулми, 350 тĕп чие, чылай хăмла çырли, çĕр çырли ӳсеççĕ. Комбинатăн утар, 400 тăваткал метр лаптăк йышăнакан теплица, пĕве пур. Тутлă шывсем тăвакан цех валли пăс хуранĕ лартаççĕ. Хĕллехи вăхăтра теплицăна ăшă шывпа ăшăтма палăртаççĕ. Мартăн 15-мĕшĕнче апат-çимĕç комбиначĕ симĕс сухан сутма тытăнчĕ. Халĕ теплицăра хăяр, редиска, помидорна купăста калчи ӳсет.

Мускав облаçĕнче «Марфино» совхоз пур. Вăл парникра пахча çимĕç ӳстерес тĕлĕшпе пысăк опыт туяннă. Апат-çимĕç комбиначĕ асăннă совхозпа çыхăну тытать, унти агрономсенчен паха сĕнӳсем илет. Çитес уйăхра апат-çимĕç комбиначĕнче ĕçлекен стахановецсем «Марфино» совхоза экскурсие каяççĕ.

Районти вырăнти промышленность предприятийĕсемпе промартельсем продукци туса кăларассине, ĕç тухăçлăхне çултан-çул ӳстерсе пыраççĕ. Кăçалхи плана тултарсан (ăна тултарасси пирки иккĕленмелли çук), предприятисемпе промартельсем, 1950 çулхипе танлаштарсан, 50 процента яхăн продукци нумайрах туса кăлараççĕ. 1952 çулта ĕç тухăçлăхĕ планпа палăртнинчен 7,3 процент ӳснĕ.

Вырăнти промышленноçа аталантарасси республикăри министерствăсемпе управленисенчен те сахал мар килет. Ширшов ячĕпе тăракан промартельте çĕвĕ машинисем кивелнĕ. Машинăсем çитменнипе артельте чылай çĕвĕçсем хăйсен машинисемпе ĕçлеççĕ. Урăхла каласан, кунта промысла кооперацин артелĕн Уставне пăсаççĕ. Чăвашпромсовет артеле çĕвĕ машинисем туянма, ĕçе механизацилеме пулăшмасть.

«Красный Октябрь» промартель металран тĕрлĕ япаласем туса кăларать. Предприятисенче производство каяшĕсем чылай. Кăçалхи мартăн 2-мĕшĕнче райсовет исполкомĕ артеле ĕçе юрăхсăр тимĕр-тăмăр уйăрса пама ыйтса Чăвашпромсовета тата Госплана çыру çырса ячĕ. Чăвашпромсовет та, Госплан та çыру çине ответ памарĕ. Чĕртавар çитменнипе «Красный Октябрь» промартель металран тĕрлĕ япаласем çителĕклĕ туса кăлараймасть.

Тепĕр тĕслĕх. Пĕлтĕр Госплан райпромкомбинатсене Çĕмĕрлери кирпĕч заводĕнчен кирпĕч илме наряд панă. Райпромкомбинатсем завода кирпĕчĕшĕн укса малтанах тӳлесе хунă. Анчах халиччен те кирпĕч илеймеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсене памалли кирпĕче ытти организацисене панă. Райпромкомбинатсем ун çинчен Госплана çырса пĕлтерчĕç, анчах вăл вĕсене ответ та паман.

Çĕмĕрлери райпромкомбинатра сушилка тумалла. Ун пирки Чăваш АССР Министрĕсен Совечĕ икĕ хутчен постановлени йышăннă. Анчах сушилкăна туса ĕçе яма оборудовани уйăрса памаççĕ. Чăваш АССР Вырăнти промышленность министерстви правительство йышăннине пурнăçлама тăрăшмасть. Çав райпромкомбинатра çăмăтă йăвалакан цех пур. Ун валли кирпĕчрен çĕнĕ çурт тăваççĕ. Вырăнти промышленность министерстви уйăрса паракан чĕртавар çăмăтă йăвалаmalli плана 30 процент тултарма çеç çитет. Министерство райпромкомбинатсене çăм уйăрса парас тĕлĕшпе мĕн шухăшлать-ши?

Пĕчĕк предприятисенче техниксем сахал. Çĕмĕрлери организацисем хулара техникум уçасси çинчен ыйту тахçанах хускатнă. Предприятисенче ĕçлекен рабочисем чылайăшĕ каçхи техникумра вĕренесшĕн. Анчах республикăри организацисем пирĕн пуçарăва темшĕн ырламаççĕ.

Сĕтел-пукан комбиначĕн территорийĕнче кивĕ кĕрешсем нумай выртаççĕ, вĕсем комбината кирлĕ мар. Райсовет исполкомĕ Главлесосбытăн Чăваш республикинчи управленийĕнчен çав кĕрешсене райпромкомбината пама ыйтрĕ. Анчах управлени начальникĕ Долбилов юлташ пирĕн ыйтăва татса памарĕ.

П. АНИСИМОВ,
Çĕмĕрле райсовет исполкомĕн председателĕн заместителĕ.

Халăх Китайĕ Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна хатĕрленет

ПЕКИН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Китай Халăх Республикинче Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна хатĕрленесси анлăн сарăлса пырать.

«Гуаньминжибао» хаçат пани çапла пĕлтерет: Суйюань, Аньхуэй, Шаньси провинцийĕсенче, Чунцин, Кантон, Ханчжоу, Фучжоу, Аньоп тата ытти хуласенче Ачасене хÿтĕлемелли Пĕтĕм тĕнчери куна ирттерме комитетсем туна.

Июнĕн 1-мĕшĕнче пур çĕрте те ачасен уявне ирттерĕççĕ. Çĕре малта пыракан çынсем, ирĕклĕх вăрçин геройĕсем, культура деятелĕсем ачасемпе тĕл пулаççĕ.

Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери кун умĕн Китайри нумай хуласенче ачасен пултарулăхне кăтартакан выставкăсем, çавăн пекех тата тĕрлĕ çĕршывсенчи ачасен пурнăçне кăтартакан фотовыставкăсем уçăлаççĕ.

«Женьминьжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Шанхайра июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне çĕнĕрен пионерсен тăватă çурчĕ тата пионерсен дворецĕ уçăлать. Майăн 31-мĕшĕнче касхине пионерсен пысăк костер чĕртеççĕ. Июнĕн 1-мĕшĕнче ачасем вăхăта савăнăçлă ирттерĕççĕ.

Ачасене хÿтĕлемелли пĕтĕм тĕнчери куна Кантонри пионерсен дворецĕ активлă хатĕрленет. Дворец çумĕнче библиотека, техника кабинечĕ пур, физкультура, химия, биологи кружокĕсем ĕçлĕç. Июнĕн 1-мĕшĕнче унта ачасен вечерĕ пулать.

Францири правительство кризисĕ

ПАРИЖ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Францири правительство кризисĕ çаплах малалла пырать. Де Голль партийĕн хисеплĕ ертÿçи Поль Рейно министрсен канашне йĕркелеме Франци Президенчĕн шухăшне йышăннă хыççăн, Рейно çĕнĕ правительство туса хума хушнине йышăннă. Республика президенчĕ çĕнĕ правительство туса хума Поль Рейнона хушнă. Поль Рейно сак миссие пурнăçлама килĕшнĕ. Ырăн вăл Наци пухăвĕнчен полномочисене çирĕплетме ыйтать.

Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Поль Рейно «анлă представительлĕ правительство» туса хума шутлать. «Юманите» хаçат çапла çырать: Рейно правительствăри ытларахăшĕ мĕнпур буржуаллă партисен (социалистсенчен пуçласа деголлевецсем таран) представителĕсен шучĕпе ÿстерме тăрăшать.

Корейăри çĕсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтерчĕ: иртнĕ кун хушшинче пур фронтсенче те пĕчĕк çапăçусем пулнă. Халăх çарĕн зенитлă чаçĕсем паян тăшманăн 2 самолетне персе ÿкернĕ, пĕр самолетне сиенленĕ.

ПХЕНЬЯН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян пĕлтернинче çапла каланă: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцесен чаçĕсем тăшмана хирĕç артиллерипе персе çапăçнă. Фронтсенче урăх ушкăнсем пулман.

Халăх çарĕн зенитлă чаçĕсем паян тăшманăн пĕр самолетне персе ÿкернĕ, 3 самолетне сиенленĕ.

Дели хулинче пулнă митингра Неру тухса калани

ДЕЛИ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Дели хулинче пулнă митингра тухса калани чухне, Неру Корея ыйтăвне чарăкс таттса пама май пуласси çинчен шанса каланă. Çав ĕнĕ вăл,—«Корейăра вăрçă чарăнни,—тенĕ вăл,—тĕнчери лару-тăрăва çăмăллатать, пĕтĕм тĕнчери миллионшар çынсене ирĕккĕн сывласа илме май парать. Çак хирĕçÿ чарăнни çĕнĕ атмосфера тума хурать, тĕнчери нумай ыйтусене лăпкă лару-тăрура пăхса тухма май парать».

Неру «ООН çарĕсем» текенсенчен Корейăра тискер çĕсем тунине сивленĕ.

БАСКЕТБОЛ ЕНĔПЕ ЕВРОПĂРА МАЛА ТУХМАЛЛИ ĂМĂРТУ

Майăн 26-мĕшĕнче Мускаврав арçын командисен баскетбол енĕпе Европăра мала тухмалли ăмăртăвĕ малалла пынă.

Египет спортсменĕсем Германи командине 74:41 шутпа, Бельги команди Дани спортсменĕсене 56:35 шутпа, Франци спортсменĕсем Швеци командине 65:33 шутпа, Югослави команди Израиль командине 57:55 шутпа, Финлянди спортсменĕсем Ливан командине 66:57 шутпа, Румыни команди Швейцари командине 74:36 шутпа, Чехословак команди Итали спортсменĕсене 59:43 шутпа çĕнтернĕ.

СССР команди Венгри командине 64:54 шутпа çĕнтернĕ. (ТАСС).

Майăн 27-мĕшĕнче Мускавра, «Динамо» стадионĕнче баскетбол енĕпе арçын командисен хушшинче Европăра мала тухмалли ăмăрту малалла пынă.

Франципе Египет баскетболисчĕсем хушшинчи вăйă сивĕччĕн иртнĕ. Египет спортсменĕсем Франци баскетболисчĕсене 74:58 шутпа çĕнтернĕ.

Болгарипе Югослави командисем хушшинчи ăмăрту урăхлăх сивĕччĕн иртнĕ. Вăйă вĕçлениччен пĕр минут малтан кăна икĕ команда хушшинче шут 25:25 пулнă. Болгари баскетболисчĕсем вăйлăн тапăнма пуçлаççĕ. Болгари команди 27:25 шутпа çĕнтерет.

Урăм ушкăнсем хушшинчи вăйăсем вĕçленнĕ. Малтанхи ушкăнра Чехословаки баскетболисчĕсем çĕнтернĕ. Иккĕмĕш вырăна—Итали команди, виççĕмĕш вырăна — Румыни команди, тăваттăмĕш вырăна—Швейцари команди.

Иккĕмĕш ушкăнра малти вырăна Египет баскетболисчĕсем, иккĕмĕш вырăна—Франци спортсменĕсем, виççĕмĕш вырăна—Германи команди, тăваттăмĕш вырăна—Швеци команди йышăннă.

Совет Союзĕн команди виççĕмĕш ушкăнра пĕрремĕш вырăна йышăннă. Иккĕмĕш вырăна—Венгри команди, виççĕмĕш вырăна—Бельги спортсменĕсем, тăваттăмĕш вырăна—Дани баскетболисчĕсем йышăнаççĕ.

Тăваттăмĕш ушкăнра пĕрремĕш вырăна—Израиль команди, иккĕмĕш вырăна—Югослави баскетболисчĕсем, виççĕмĕш вырăна—Болгари спортсменĕсем, тăваттăмĕш вырăна—Финлянди, пиллĕкмĕш вырăна—Ливан командисем йышăнаççĕ.

Тăватă кун ушкăнри ăмăрту пынă хыççăн юлашки тĕлпулура малтанхи сакăр вырăна йышăнассишĕн вылямы Чехословакин, Италин, Совет Союзĕн, Венгрин, Египетăн, Францин, Израильĕн, Югославин командисем право илнĕ.

Румыни, Швейцари, Германи, Швеци, Бельги, Дани, Болгари, Финлянди, Ливан командисем ытти вырăнсене йышăнассишĕн ăмăртаççĕ.

Ăмăрту малалла пырать. (ТАСС).

Искусство деятелĕсен тăванла туслăхĕ

ТИРАНА, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Албанири искусство деятелĕсен союзĕ, Албанипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществипе пĕрле, «Скандербег» кинофильмри рольсене выляkan совет киноартисчĕсем Албанири искусство тата наука деятелĕсемпе, Албанири общественла организацисен представителĕсемпе тĕл пулассине организациленĕ. Совет киноартисчĕсене Албанири искусство деятелĕсен союзĕн председателĕ Фото Стамо саламланă. Вăл: «Скандербег» фильма ÿкерес ĕçре совет артисчĕсемпе Албани артисчĕсен творчествăлла ĕçлени Албанири çĕнĕ искусствăна «аталантарас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăрать, тенĕ.

Францири чугун çул работникĕсен забастовки

ПАРИЖ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм Францири Ĕçлев конфедерацийĕ чĕнсе каланипе паян Францири чугун çул работникĕсен ĕç укçи ÿстерессишĕн тата хăйсен ытти тĕрĕслĕхлĕ ыйтăвĕсене тивĕçтересси кĕрешнĕлли кун ирттернĕ. «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Марсель, Париж, Бордо, Брест тата ытти хуласенче Пĕтĕм Франци Ĕçлев конфедерацине кĕрекен чугун çул работникĕсен федерацийĕ кăларса тăратнă сĕнÿсем çумне католикла профсоюзсен рядовой членĕсем тата сылтăм социалистсем ертсе пыракан «Форс увриер» профсоюзсен рядовой членĕсем хутшăннă.

Касхине тухса тăракан «Франс суар» хаçат çапла çырать: забастовка тунă пирки çĕршыври районсенче пуринче те поездсем çÿремелли график нумай пăсăлнă. Тулонра тата Ницца хулинче поездсем çÿреме пачах чарăннă. Марсель хулинче, Парижри хăшпĕр вокзалсенче тата ытти хуласенче те нумай поездсем çÿремеççĕ.

Францири çарĕсем Йен-Вирен тухса кайнă

ЛОНДОН, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Ханойри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: майăн 27-мĕшĕнче Франци Союзĕн çарĕсем Ханойран 30 миля кăнтăр енчи Йен-Ви ятлă тĕрекле-нĕ пунктран тухса кайнă.

Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, çар çыннисем Йен-Вирен тухса кайни Францири çарĕсем пысăк поражени тÿсни çинчен калать, тесĕ. Йен-Ви—маршал де Латтр де Тассиньи Ханой тавра тата Хĕрлĕ юханшыв дельти тавра туса хунă «стенан» чи кирлĕ вырăнĕсенчен пĕри пулать, тесе шутлаççĕ.

Болгарире водохранилище тунă çĕрте

СОФИЯ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Болгарире Тундже юханшывĕ çинче Г. Димитров ячĕпе тăракан пысăк водохранилище тунă çĕрте хĕрсе ĕçлеççĕ. Юханшыв шайĕнчен 40 метр çÿлĕш пĕве туса ларнă ĕнтĕ. 24 километр тăршшĕ магистральнăй канал тăвас ĕç те хăвăрт вăйланса пырать. Хăватлă совет техникипе çÿ курни тата строительствăра социализмла ăмăрту анлăн сарăлни водохранилищĕне палăртнă срокран малтан туса пĕтерме май парать.

Японире Америка çар объекчĕсем валли çĕр участокĕсене туртса илнине хирĕç протестлеççĕ

ШАНХАЙ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Токиоран пĕлтернĕ тăрăх, Японири влаçĕсем Исикава префектурине кĕрекен Уцинада ялĕн районне полигон тума Америка çарĕсене пама решени йышăннă. Майăн 25-мĕшĕнче Исикава префектуринче пурăнакан çынсен представителĕсем, префектура губернаторĕпе тата парламентăн кĕçĕн палатин хăшпĕр депутачĕсемпе пĕрле ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Окадзаки патĕнче пулнă. Вĕсем Уцинада районне Америка çарĕсем валли полигон тума туртса илнине хирĕç протест тунă.

Японири профсоюзсем Уцинада районĕнчи халăх майлă тăраççĕ.

Пĕтĕм тĕнчери врачсен конгресĕ хупăннă

ВЕНА, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери врачсен Вена хулинче пухăннă конгресĕ хăйĕн ĕçне вĕçленĕ. Конгресс ку чухнехи пурнăç условийĕсене тата вĕсем халăх сывлăхĕ çине мĕнле витĕм панине пăхса тухнă. Конгресс ĕçне 32 çĕршыври медицина деятелĕсем хутшăннă.

Конгресс виçĕ кун хушшинче 70 наукăлла доклад тата сывлăх ĕçĕн тĕрлĕ ыйтăвĕсем тăрăх тухса каланисене итленĕ.

Конгресра Совет Союзĕнчи медицина деятелĕсем — Тимаков профессор тата Маслов профессор тухса каланисене пысăк тимлĕхпе итленĕ. Вĕсем совет медицинин наука тунă чаплă çитĕнÿсем çинчен, Совет Союзĕнче медицина пулăшăвне мĕнле организацилени çинчен каласа панă.

Конгресс председателĕ профессор Пьетро Верга (Итали) конгреса хупнă чухне çапла каланă: конгресс тĕнчери тĕрлĕ çĕршывсен врачĕсен опычĕне паллашас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. Вăл врачсене пĕрлештерес тата вĕсем хушшинче творчествăлла туслăх туса хурас тĕлĕшпе тĕнчери пысăк событи пулса тăчĕ.

Конгресс пĕр шухăшлăн пулса решени йышăннă. Решенире пĕтĕм çĕршывсенчи медицина организацийĕсен конгресĕн ĕçĕсемпе паллашма, медицина деятелĕсен хушшинче çыхăну тытма тата, кирлĕ пулсан, çĕнĕ конгресс пухма тĕнчери секретарната çапла йĕркелесе хума йышăннă.

Грецире каллех нумай çынсене арестленĕ

АФИНЫ, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Авги» хаçат çапла пĕлтерет: Салоникире тата Грецин ытти хуласенче Греци охранки отставкăна тухнă Мустеракис генерала—фашизма хирĕç кĕрешсе чапа тухнă героя, отставкăна тухнă Сакетас майора, Демократиллĕ пĕрлĕхлĕ сулахай парти членне Галифаса арестленĕ.

Мустеракис хăйне арестлениве хирĕçлесе премьер Папагос патне телеграмма яма шутланă, анчах телеграф унăн телеграммине йышăнман. Телеграммăра çапла каланă: мана арестлерĕç, каллех Агиос Евстратиос утравĕ çине кăларса ярасçĕ. Эпĕ пĕлетĕп, мана никам та закона хирĕçле ĕç тунă тесе айăплама пултараймасть. Мана арестленине хирĕç протест паратăп. Полици ĕçĕ эсир демократиллĕ ирĕклĕхсем çинчен каланине килĕнсе тăнине тĕрĕслеме ыйтатăп.

Сурĕср Грецири демократиллĕ пĕрлĕхлĕ сулахай парти организацийĕ юлашки вăхăтра Греци охранки айăпсăр çынсене çĕнĕрен арестлеме тытăннине хирĕç протестлет.

ИТАЛИ ХАЛĂХĔ ФАШИСТСЕНЕ ХИРĔÇ ТĂРАТЬ

РИМ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Унита» хаçат çапла пĕлтерет: Алатри хула халăхĕ вăрçă преступникне — Грацианине суйлав умĕнхи митингра тухса калама ирĕк паман.

Грацианин Алатри хулине 10 грузовик çине ларнă фашистсемпе пĕрле пырса çитнĕ. Хула халăхĕ Грацианине шăхăрса, «Сутăнчăк, ирсĕр» тесе кăшкăрса кĕтсе илнĕ. Полици Грациание сăмах тухса калама май парас тесе фашизма хирĕçле демонстрацие хутшăннă çынсем çине тапăннă. Çав демонстрацие христианла-демократла партин рядовой членĕсем те нумай хутшăннă. Грациани тата ытти фашистсем хуларан тухса кайнă хыççăн тин, çынсем Грацианине сивлесе кăшкăрма, шăхăрма чарăннă.

ГРЕЦИ ХРЕСЧЕНĔСЕН ПУРНĂÇĔ ЙЫВĂР

АФИНЫ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). «Аллаги» хаçат çапла пĕлтерет: Олимпи районĕнчи (Пелопоннес) Крестен ялĕнче хресченсем пачах çăкăрсăр ларасçĕ, вĕсем, гитлерла оккупаци вăхăтĕнчи пек, курăксемпе тăранса пурăнаççĕ. Пелопоннесри нумай ялсенчи, çавăн пекех Грецин ытти провинцийĕсенчи хресченсем те çакăн пекех хĕн-хур курса пурăнаççĕ. Кунта урпа çăкрипе çĕрулми чи лайăх апат шутланать.

Бирмăпа Китай хушшинчи суту-илÿ

ЛОНДОН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Рангунран çапла пĕлтерет: Бирма правительстви Китая 2.500 тонна каучук турттарса кайма ирĕк панă.

Рейтер агентстви çак çинчен асăрхатать: кăçалхи март уйăхĕнче Бирма Китая 1.500 тонна каучук сутнă хыççăн США посольстви Бирма правительствине протест туни çинчен пĕлтернĕ.

Чилири студентсен забастовки

НЬЮ-ЙОРК, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сант-Ягоран (Чили) çапла пĕлтерет: унта университетсене вĕренекен 15 пин студент вĕренÿ системине реформа тума ыйтса забастовка тăвать. Корреспондент каланă тăрăх, çĕршыври мĕнпур университетсене вĕренекен студентсен забастовки пулма пултарать.

„Война и мир" ятлă совет опери Флоренцири опера театрĕн сцени çинче

РИМ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Енер Флоренцире Толстой романĕ тăрăх Сергей Прокофьев çырнă «Война и мир» ятлă оперăн премьери пулнă. Оперăна Флоренцире кашни çул май уйăхĕнче пĕтĕм тĕнчери палăл хирежсеремпе юрĕ ĕстисем хутшăннине ирттерекен уйăхлăх программине кĕртнĕ.

Опера пите ăнăçлă иртнĕ. Пысăк хаçатсен редакцийĕсем совет композиторĕ çырнă произведени пирки рецензи çырма Флоренцие хăйсен музыка критикĕсене янă. «Унита» хаçат çапла çырать: «Война и мир» оперăна лартса пани «кăçал Италин культура пурнăçĕнче чи пысăк событисенчен пĕри пулса тăрать. Опера питĕ ăнăçлă иртнĕ».

Гренландири лару-тăру пирки

КОПЕНГАГЕН, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Дани хаçачĕсем пĕлтернĕ тăрăх, кăçал çулла Туле (Гренланди) ялĕнчи мĕнпур тĕп халăха çурçĕре, Инглфилд-Бреднинг бухти патне куçараççĕ. Туле патĕнче США вăрçă хыççăнхи çулсенче пысăк сывлăш-çар бази туса хунă.

«Берлингске тиденде» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Инглфилд-Бреднинг бухти патĕнче Туле ялĕнчи çынсене вырнаçтарма кăçал вăхăтлăха темиçе барак тăваççĕ.

Глезоса ирĕке кăларассишĕн пыракан юхăм

АФИНЫ, майăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Хаçатсем çапла пĕлтереççĕ: Акрополь çурчĕ çинчен гитлерла ялава илсе пăрахса, Глезос паттăр ĕç тунăранпа 12 çул тултарать. Çакна май çĕршывра тĕрлĕ общественла организацисем, çĕршыв çынсем корольпа тата правительствăран наци геройне Манолис Глезоса тĕрмерен кăларма ыйтаççĕ.

УИЛЬЯМ ФОСТЕР „ĔÇĔ" ПИРКИ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Федеральнăй судья Райян США-ри Коммунистсен партийĕн Наци комитечĕн председателĕн Уильям Фостерăн ĕçне пăхса тухасси паллă мар срока кайаракаси çинчен кăтарту панă. Уильям Фостера Смитăн реакциллĕ законĕ тăрăх айăплама тытăннă пулнă.

Судья пĕлтернинчен çакă курăнать: Уильям Фостер ĕçĕ пирки çакнашкал решени йышăнасси—Уильям Фостер чирлĕ пулнинчен килнĕ.

Райян решенийĕ хыççăн, США влаçĕсем Фостера залогра ирĕке кăларнă тесе шутлаççĕ. Анчах та, тесе кăтартса парать Ассошиэйтед Пресс агентстви, Фостера суд тăвас ĕç тек урăх пусмалла шутланмасть пулмалла.

СУЭЦ КАНАЛĔН ЗОНИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, майăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Фаидаран (Суэц каналĕн зони) çапла пĕлтерет: паян Англин Фаидари чаçĕсенчен Хĕрлĕ тинĕсри Адабия порчĕн районне 500 яхăн салтак илсе кайнă.

ЕÇСЫННИ ДЕПУТАЧĔСЕН ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН (ТĂВАТТĂМĔШ СОЗЫВРИ) ВИÇÇĔМĔШ СЕССИНЕ ПУХАССИ ÇИНЧЕН

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполнительнăй комитечĕ хула Совечĕн депутачĕсене çакăн çинчен пĕлтерет: 1953 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче, ытларикун, касхине 7 сехетре, ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн (тăваттăмĕш созыври) виççĕмĕш сессийĕ пухăнать.

Лару Советсен çуртĕн пысăк залĕнче (Ленинградски урам, 42-мĕш çурт) пулать.

Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн исполнительнăй комитечĕ.

Ыйтусемпе ответсем

ЫЙТУ. Çĕр айĕнчи пуянлăхсем мĕнрен пусланса кайнă? Вĕсем мĕншĕн хăшпĕр вырăнсенче çеç тупăнаççĕ?

М. МИРОНОВ. Вăрнар районĕнчи ачасен санаторийĕ.

ОТВЕТ. Çĕр айĕнче усăллă пуянлăхсем питĕ нумай. Халăх усăллăхĕпе тĕрлĕ металлсене, металлоидсене, чулсемпе, арасна йышши тăмсемпе, хăйăрсемпе, сланецсемпе, çĕр кăмрăкĕпе, нефтьпе, торфпа тата ыттипе те анлăн усă курассĕ. Вĕсем пĕр пек майпа пулман. Хăшĕсем авалрах пулса çитнĕ, хăшпĕрисем кайрантарах пулнă, хăшпĕрисем халĕ пулса пыраççĕ.

Хальхи космогони (çăлтăрсемпе планетăсем мĕнле пулни çинчен вĕрентекен наука) пĕлтернĕ тăрăх, Çĕр темиçе миллиард çул ĕлĕкрех тĕрлĕ вĕтĕ япаласенчен пухăнса пулнă. Тин çеç пухăнса пулнă Çĕр çинче тĕрлĕ веществосем саланса выртнă. Çĕр айĕнчи пуянлăхсем чи чухне халь пек пĕрлешсе выртма пултарайман, тĕрлĕ металсем пĕр-пĕрине хутăш пулнă.

Çĕр составне кĕрекен веществосем хушшинче уран, тата радиоактивлă ытти элементсем пулнă. Вĕсем халĕ те нумай. Радиоактивлă элементсем яланах пĕр чарăнмасăр ăшă кăларса тăнине Çĕрĕн шалти сийĕсем ăшăнаççĕн ăшăнса пынă. Ситеклĕ хĕртсен, пур веществосем те çемçелеççĕ, шăранса шĕвек пулма та пултараççĕ. Савăнпа Çĕрĕн шалти сийĕсем çемçелсе çитнĕ. Çутти сийсем питĕ вăйлă пусарса тăнă пирки Çĕрĕн шалти сийĕсем шĕвеленмеççĕ, анчах çемçе пулаççĕ. Шĕвĕ пулса ăшĕнчи хăйăр нпала хуть те хăçан та халаллах ансă пырать. Хĕрсе çемçелнĕ япала Çĕрĕн те унăн пайĕсен ытла пайăрахайсем питĕ çулен малалла анса пыраççĕ, çĕр сийĕ çемçелле хăпараççĕ. Савăнпа Çĕрĕн шалти вырăнĕсенче, центр çывăхĕнче, хальхи вăхăтра чи йывăр металсем пухăнса тесе шутлаççĕ. Çÿлерех кăшт çăмăлрах металсенчен тытăнса тăракан сийсем пулнă. Чи çÿлти сийĕ çăмăл веществосенчен тытăнса тăрать.

Анчах Çĕрĕн сийĕсем яланах пĕр пек тăмаççĕ. Хăшпĕр вырăнсенче питĕ пысăк пайсем, тавраш сийсем хĕснипе, çÿлелле хăпарса тухаççĕ. Çакăнта вара çÿлĕ тусем пулаççĕ. Çÿлĕ тусем çинчи çÿлте çăмăлрах веществосенчен тытăнса тăракан сийсем, айларах — йывăртарах веществосенчен тытăнса тăракан сийсем.

Тусен тăррисем çаплипех юмаççĕ. Вĕсем тĕпренсе пынипе лутраланаççĕ. Тусен тăррисенчи чулсем составне тĕрлĕ веществосем кĕреççĕ. Вĕсенчен хăшĕсем ăшăнна чухне хăвăртрах сарăлаççĕ, хăшĕсем — хуллентрех. Сивĕннĕ чухне те пĕр пек пĕрĕнмеççĕ. Савăнпа ăшăнна тата сивĕннĕ чухне тусен çиелти сийĕсем çурăлаççĕ. Çурăксене шыв юхса кĕрет. Хĕлле çак шыв шăнать те шăнсан, пăр çак çурăксене татах асăлатать. Ситеклĕ вăхăт иртсен, тусен тăррисенчи чулсем татăла аннаççĕ.

Сурхи шыв е вăйлă çумăр шывĕ чылай пысăк чул татăкĕсене те аялалла юхтарать. Чул татăкĕсем ытти чул татăкĕсемпе çапăнса ватăлаççĕ. Çавăнпа вĕсене çумне çапăнса вĕтелеççĕ. Аялалла юхса анакан чул татăкĕсем явалаççĕ, вакса тĕпренсе вĕтĕ чулсем шывпа тата çитинченех юхса каясçĕ. Шултăрарах чулсем шыв тĕпне ларса хăйăрах сийсем пулаççĕ. Чулан питĕ вĕтĕ пайĕсем пылак тинĕсе çитиччен шыв çинче тăрать. Кунта вĕсем тинĕс тĕпне анса, тăмла сийсем пулаççĕ. Унăн тĕпĕнчи хулалле хулăнланса пырать. Шывра ирĕлекен веществосем юрпа çумăр шывĕпе çÿлĕ вырăнсенчен аялалла юхса кайсть. Çапла Çĕрĕн тинĕсĕ çинче тинĕсе каясçĕ. Шыврă ирĕлекен веществосем юрпа çумăр шывĕпе çÿлĕ вырăнсенчен аялалла юхса кайсть.

Ирĕлнĕ веществосем тинĕс тĕпĕнче пухăнса пынă. Тинĕссенче темĕн чухлĕ пĕтĕ чĕрчунсем пурнаççĕ. Вĕсене çинче пурнакан хăйсем тинĕс шывĕнчен пухăнаççĕ. Çав тинĕс шывĕнчи хăмăрсем ытларахăшне çийĕнче пурнакан хăйсем кăшт та пулнипе пĕр татăкне те тăрать. Кунта вĕсен çиеленаççĕ, пĕр çулла тасапсăр пăн пулать. Пĕр ушкăн çулламанса тусем те çав тинĕсри веществосене хăйсем пулаççĕ, вăл та нумай тепĕр çынсемпе пырать. Тинĕсри тĕпе анăççĕ. Тинĕсрен хăмăрсем çук, пайнăк чыс та çав курăксемпе йĕркеленнĕ.

Хĕвĕ çулталăк хушши чи хăшпĕр тинĕсри юханшывсемпе вĕсен питĕ кăмрăк тăрăмĕсем тата нумай пулаççĕ. Çавăн пек тинĕсри хăйсем вăрăм çулсем тăршшĕпе пухăнса пынăран тĕпре темиçе метр хулăнăш сийсем пулаççĕ. Кайран вĕсене ытти сийсем хупласа илеççĕ. Çав вăхăтра питĕ йывăр сийсем пусарнипе тата ăшă витĕмĕпе вĕсем пĕрлешсе тĕрлĕ чулсем пулаççĕ. Тинĕс шывĕ типсе, тинĕс тĕпĕ çÿлелле хăпарса тухни вырăнсенче вара çак сийсем çĕр çийĕн юлаççĕ. Кайран вĕсене каллех ытти сийсем хупласа илеççĕ. Унăн тĕпĕнчи пĕр пайĕ çыннăн усси валли пайăр кирлĕ пулать.

Тимĕр рудине хăшпĕр тĕлте айăмлă вырăнсенче те чавса илесçĕ. Кун йышши руда кÿлĕсенче пулнă, вăл кÿлĕ руди, тесçĕ. Кÿлле юханшывсем тăрăх шыва ирĕлнĕ тимĕр юхса кĕрет. Хăшпĕр бактерисем шывра тимĕре уйăрса илнипе, вĕсен организмĕнче чылай тимĕр пухăнать. Бактери вилсен кÿлĕ тĕпне анать. Çапла кÿлĕ тĕпĕнче чылай тимĕр руди пухăнать.

Çĕр кăмрăкĕпе ытти çунакан япаласене илĕпĕр. Вĕсем кайрантарах пулнăскерсем. Тахçан авал çитĕннĕ ÿсентăрансем çĕрсе пĕтеймен, пĕрмай пĕр вырăнта ÿсе çитнĕсе, çавăнтах юнине чылай тусан сий пулса юлнă. Кайрантарах вĕсем хăйăра витĕннĕ те çĕрме пултарайман. Йывăççен çĕртме сывлăшри кислород кирлĕ. Кислород пулмасан, йывăç е ытти ÿсентăрансене çĕртекен бактерисем те пурăнаймаççĕ, ÿсентăран çĕреймест. Çĕрсе пĕтмен ÿсентăрансенчен тĕмен чылай вăхăт иртсен çĕр кăмрăкĕ пулса выртнă.

Нефть пулни çинчен çапла пĕлтереççĕ. Тахçан авал тинĕс тĕпне вилнĕ чĕрчунсем, ÿсентăрансем анса тинĕс тĕпĕнчи хăйăрпа, тăмпа хутăшса пынă. Çĕр çийĕ улшăнса пынă май авалхи тинĕс ÿсентăрансене тинĕс пулнă. Вăра тинĕс тĕпĕнче юлнă чĕрчун вилисем, ÿсентăрансем çĕрме пуçланă. Унăн çинче çав чылай тарăн вырăнсенче тинĕс тĕпĕнчи тăрса юлнă. Тарăн вырăнсенче чĕрчунсемпе ÿсентăрансен пулнă веществосем шĕвек тата газ евĕрлĕ углеводородсем пулнă те çĕр шăтăкĕсем тăрăх куçса çÿресе юхса хăй пулать юрать тăрать. Çав углеводородсене нефть тесçĕ. Çапла нефть пирки Çĕр çинче тинĕс тĕпĕ ÿсентăрансем, чĕрчунсем пурнăçĕн хыççăн тин пулса юлнă.

Çапла çĕр айĕнчи пуянлăхсем тĕрлĕ майпа пулаççĕ. Вĕсем ытти хушăсене тутăх пулнă мар, хăйсем вĕсене хутăшлă туса тăраççĕ.

Ф. КУЗЬМИН.

ПĔЛТЕРНИ

Майăн 29-мĕшĕнче, 19 сехетре, партин хула комитечĕн библиотека çуртĕнче партин историне марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсем тăрăх вĕренмелли пĕрремĕш тата иккĕмĕш çул ĕçлекен кружоксен руководителĕсен семинарĕсем пулаççĕ. Семинарта кружоксене итоглă занятисем ирттересси çинчен пăхса тухмалла.

Семинар руководителĕсем З. И. Федорова тата А. И. Воробьев юлташсем.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — майăн 30-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Вей, ветерок» (кăçалхи сезонта юлашки хут).

ЧАСАХ! — «Мачеха».

КИНО

«РОДИНА»—майăн 29-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Гибель «Орла», 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче «Секретная миссия».

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!

1953 çулхи иккĕмĕш çур çулта илсе тăма

„КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ", „СОВЕТСКАЯ ЧУВАШИЯ" „МОЛОДОЙ КОММУНИСТ", „ÇАМРĂК КОММУНИСТ"

хаçатсем тата

„АГИТАТОР БЛОКНОЧĔ"

(вырăсла тата чăвашла тухаканнисене) çырăнса илĕр.

Хаçат-журнал илсе тăма «Союзпечать» уйрăмĕсенче тата кашни почтăра çырăнма пулать. Письмоносецсем граждансен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем заводсемпе фабрикăсенче, учрежденисенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—5-04, ял хуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—6-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01395 Типографи № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.